2011 çулхи декабрĕн 4-мĕшĕ – РФ Федераци Пухăвĕн Патшалăх Думин депутачĕсене тата ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсене суйламалли кун

Çĕнтерӳ çулĕ

Вăрнар район хаçачĕ

2011 çул • чӳк/ноябрь/ уйăхĕн 18-мĕшĕ • эрне кун • 136/10451/ № • Хакĕ ирĕклĕ

1930 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕнчен тухать

электронлă адрес: print@vurnar.cap.ru

Пĕтĕмпех çын валли тата çыншăн

Чăваш Республикин Президенчĕ М.В.Игнатьев Чăваш Республикин Патшалăх Канашне янă Çыру

Хисеплĕ депутатсем,
хаклă ентешĕмĕрсем!

Халăх ырлăхĕ — чи аслă саккун. Влаç органĕсен пĕтĕм ĕçĕ-хĕлĕ пĕртен пĕр çак тĕллеве пăхăнса тăмалла тата должноçри çынсен, мĕн пур шайри влаç органĕсен ĕçченĕсен пирĕн тивĕç çыншăн ĕçлесси пулнине самантлăха та манмалла мар. «Çынна мĕнле виçепе виçĕн, хăвна та çавăнпах виçĕç». Çак сăмахсен тĕрĕслĕхне пин-пин çул çирĕплетекен халăх ăсĕ çапла вĕрентет, çавăнпа та пирĕн пурин те çак чăнлăха хамăрăн тавра курăмра тĕп вырăна хумалла тата кулленхи пурнăçри девиз евĕр йышăнмалла. Çырăва хатĕрленĕ вăхăтра эпĕ республикăра пурăнакансене хастартарах пулма, хăйсен граждан яваплăхне палăртма, сĕнĕвĕсене пĕлтерме ыйтса чĕнсе каларăм. Сĕнӳ чылай килчĕ, эпĕ çакăншăн пурне те чунтан тав тăватăп.

«АБС ЗЭиМ Автоматизаци» акционерсен обществин тĕп конструкторĕ Юрий Иванович Степанов, сăмах май, эпĕ унта нумаях пулмасть пулса курнăччĕ, чĕнсе каланине йышăнса хăйĕн сĕнĕвĕнче Çыру ятне улăштарса ăна Чăваш Ен халăхне Чĕнсе калани тесе палăртмалли çинчен çырать. Ахăртнех, çакă тĕрĕс те пулĕ. Çитменнинĕ, хисеплĕ парламентарисем, сире кăна мар, республика гражданĕсене те тӳрремĕнех чĕнсе каламалли сăлтав паян нумай.

Пĕрремĕшĕнчен, нумаях пулмасть эпир Чăваш Ен Патшалăх Канашне республика бюджечĕн проектне тăратрăмăр. Йăлана кĕнĕ пекех бюджет социаллă тĕллевлĕ, унти тăкаксен виççĕ тăваттăмĕш пайĕ пирĕн граждансемшĕн чи пĕлтерĕшлĕ ыйтусемпе çыхăннă. Çавăнпа та республика пуçлăхĕ пулнă май çав бюджет обязательствисене пурне те пурнăçлассине пĕтĕм яваплăхпа пĕлтеретĕп.

Иккĕмĕшĕнчен, хальхи лару-тăру суйлав умĕнхи пулнипе палăрса тăрать. Вăл общество пурнăçĕ çине хăйне майлă витĕм кӳрет, апла пулсан граждансен шухăш-кăмăлĕнче те палăрмасăр юлмасть, çавăнпа та ку енĕпе хам мĕн шухăшланине асăнса хăвармасăр пултараймастăп. Суйлав теми суйлавçăшăн яланах йывăр та хĕрӳллĕ тема шутланать, чи пĕлтерĕшли вара — йăлана кĕнĕ пекех унта йӳнĕ популизм та, куç кĕрет ултав та туллиех.

Чылай тупăшакан вăйсен, тавлашакан кандидатсен тĕллевĕ политика пурнăçне йывăрлатса кăтартасси, суйлавçа сехĕрлентересси пулса тăрать. Çавăн пекех экономика статистикине пĕлсех кайман, ăна-кăна питех чухламаннине пула, тен, тата йăнăшнăран та, çăмăллăнах ĕненекен, вăйра тăракан влаçа, ăна суйлав тапхăрĕнче яланах тапăнаççĕ, айăпласа каланă кирек мĕнле сăмаха та çывăха илекен çынсене тăрăшсах пăтраштарма хăтланаççĕ. Анчах та пирĕн халăх кун пирки çапла калать: «Тӳрпас тăвакана мар, пӳрт лартакана платник теççĕ». Шантарсах калама пултаратăп: пуçланă кирек мĕнле ĕçе те эпир вĕçне çитернĕ. Хăшĕ-пĕри пек пулăмсене хитрелетсе кăтартман. Йывăрлăхсене пăхмасăр, пурнăçлама пултарайманнине нихăçан та шантарман, шантармастпăр та. Ку манăн, Президентăн, принциплă позицийĕ шутланать. Çавăнпа та пурсăра та кирек мĕнле информаци илнĕ чухне те тимлĕ тата яваплă пулма ыйтатăп.

***Тĕрĕссипе каласан, пирĕн лару-тăру çирĕп** тата мана, республика ертӳçине, пит темлех пăшăрхантармасть. Чăваш Ен тăрăх тухса çӳрекен йышлă çул çӳрев вăхăтĕнче хам куçпа курни, ĕç коллективĕсемпе тĕл пулни çынсем пуш сăмах çаптарас шухăшлă мар, ĕçлес тĕллевлĕ пулнине çирĕплетеççĕ. Çавăнпа та коллективсем ертӳçĕсемпе пĕрле лайăх кăтарту тăвассишĕн ĕçлекен вырăнта çирĕплĕх те, ыранхи кун шанчăклăхĕ те пур.*

Ку кăна та мар, юлашки икĕ çул хушшинче экономикăна кризисран тухма пулăшса хăйсен ĕç вырăнĕнче яваплăха туйса тăрăшнă Чăваш Енри мĕн пур çынна манăн тав тума та сăлтав пур. Эпир республикăн социаллă пурнăçпа экономика кăтартăвĕсене палăрмаллах лайăхлатрăмăр. 2010 çултан

пуçласа экономикăн пĕтĕм тĕп кăтартăвĕ енĕпе çирĕп ӳсĕм палăрать.

Эпĕ 2011 çулта экономика аталанăвĕн кризисченхи шайне тухма тĕллев лартнăччĕ. Цифрăсем амбициллĕ пулин те — эпир çакна тума пултартăмăр. Регионти пĕтĕмĕшле продукт калăпăшне 199 миллиард тенке çитерме палăртнăччĕ, чăннипе вăл 200 миллиард тенкĕрен кая мар пулать. Кăçал тĕп капитала хывакан инвестицисен хисепĕ 55 миллиард тенкĕ шайне çитет. Иртнĕ çул тухăçлă пулчĕ: Чăваш Енре промышленноçпа ял хуçалăх производствин индексне Раççейри вăтам кăтартуран пысăкрах шая çитернĕ, ку кăтарту строительствăра та, вак суту-илӳре те пысăкрах, халăхăн укçа-тенкĕн чăн тупăшĕсем те ӳснĕ. Куллен кирлĕ апат-çимĕç хакĕсем ӳсесси те пирĕн патра пĕчĕк шайра. Апат-çимĕç таварĕсен потребитель хакĕсен индексĕ енĕпе Чăваш Республики федерацин Атăлçи округĕнчи регионсен хушшинче Чулхула облаçĕпе тата Мари Республикипе пĕрле иккĕмĕш вырăнта тăрать.

Пирĕн çӳллĕ рейтинга Пĕтĕм тĕнчери агентствăсем тепĕр хут çирĕплетрĕç, çакă Чăваш Енĕн инвестици илĕртӳлĕхне лайăх хак пани тата ĕççем чăннипе мĕнлерех пынине палăртни шутланать. Экономика ӳсĕмĕ, патшалăх парăмне тивĕçтерме каякан тăкаксене вырăнлăрах туни, федераци бюджечĕн укçи-тенкине явăçтарни республика бюджетне палăрмаллах лайăхлатма май пачĕç. Эпир çулталăкри тупăшсен калăпăшне — 32,4 процент, тăкаксенне вара 42,6 процент ӳстерме пултартăмăр. Çав укçа-тенке çын вăй-хăватне аталантарма уйăртăмăр, мĕншĕн тесен унран хаклăраххи урăх çук.

Промышленноç хăйĕн хăвăртлăхне сыхласа хăварни пире 10 уйăхри кăтартусем енĕпе федерацин Атăлçи округĕнче малта пыракансен йышне кĕме май пачĕ. Экономика ĕçĕ-хĕлĕнчи тирпейлекен производствăсен 12 тĕсĕнчен тăххăрăшĕнче производство индексне ӳстернĕ, ĕç тухăçлăхĕ кунта 20 процент ытларах пысăкланнă. Пурăнмалли çурт-йĕр хута ярас ĕç индексĕ пирĕн çулран-çул Раççейре чи лайăххи. Эпир пурăнмалли çурт-йĕр строительствин хăвăртлăхне сыхласа хăвартăмăр — ку кăтартупа эпир йăлана кĕнĕ пекех Раççейре малти вырăнта тăратпăр. Тата çакна палăртас тетĕп: пурăнмалли çурт-йĕрĕн 50 процентне пирĕн ял çĕрĕнче çĕклеççĕ, çакă ял халăхĕ тĕлĕшпе тытса пыракан патшалăх политики ăна пулăшассине тĕп вырăна хунине çирĕплетет, çавна пулах эпир Чăваш Енре пĕр яла та çухатмарăмăр.

Ял хуçалăх отраслĕнче те çĕр ĕçченĕсене тав тума сăлтав пур. Типĕ те шăрăх çанталăклă 2010 çул хыççăн вĕсем тăватă хут ытларах /малтанлăха шута илнă виçепе/ тырпул тата тухăçлăхĕ икĕ хут ытларах ӳснине кура çавăн пекех икĕ хут ытларах çĕр улми ӳстерсе пухса кĕртме пултарчĕç. Хăйсем пăхса ӳстернĕ ял хуçалăх çимĕçĕсемпе халăха хĕл валли çителĕклĕ тивĕçтерчĕç, çав шутра йышлă ярмăрккасенче те /посредниксемсĕр йĕркеленĕ суту-илӳ ĕçĕ хула çыннисене сакăр миллион тенке яхăн укçа-тенкĕ перекетлеме май панă/. Пирĕн çавăн пекех аш-какай тата çăмарта туса илесси, мĕн пур категорири хуçалăхсенчи ĕнесен шучĕ те ӳснĕ. Ял хуçалăх производствин хăвăртлăхĕн ӳсĕмĕ енĕпе Чăваш Ен Атăлçи федераци округне кĕрекен регионсен хушшинче пиллĕкмĕш вырăн йышăннă.

Чăваш Ен экономикин лайăх аталанăвĕ тытăмлă йышăнусем тума май пачĕ. Хальхи **Чăваш Ен экономикăна экспортпа чĕр тавар никĕсĕ çинче аталантарнинчен инноваци аталану çине куçармалли стратегие** *машинăсем тăвассине, электротехникăпа агропромышленноç комплексĕсене, строительство ĕçне, информаци технологийĕсене, предпринимательлĕхе приоритетлă майпа аталантарса пурнăçа кĕртет. Раççей Финанс министерстви пирĕн республикăна çĕршывăн «электрон бюджетне» ĕçлеттерме суйласа илнĕ пилотлă виçĕ регион шутне кĕртни вара эпир бюджет «енчĕкĕпе» пысăк ăсталăхпа ĕçленине тата пирĕн çак сферăри ĕçе пысăк хак панине çирĕплетет.*

Манăн политикăри оппонентсем суйлав умĕнхи лару-тăру шайĕнче республикăн патшалăх парăмĕн темине çĕклеççĕ, анчах та яваплăн пĕлтеретĕп: Чăваш Ен хăйĕн парăм обязательствисене парăм шайне ăнăçлăн чакарса пурнăçласа пырать тата чи малтан тӳлемелли социаллă пĕлтерĕшлĕ тӳлевсене вăхăтра та туллин тӳлет, çавна май тата хăй çине социаллă çĕнĕ обязательствăсем те илчĕ. Иртсе пыракан çулта патшалăх парăмне тухăçлăн пурнăçланине пула эпир 76,4 миллион тенкĕ перекетлерĕмĕр. Кăçал эпир тăватă миллиард тенкĕ тавăрса паратпăр, çитес çул вара — пилĕк миллиард тенке яхăн, эпир çакна графикпа килĕшӳллĕн пурнăçлатпăр, кунта нимĕнле иккĕленӳ те пулма пултараймасть.

Хисеплĕ ентешĕмĕрсем!

Сирĕнтен кашниншĕнех ыранхи кун шанчăклăхĕ тата паянхи пурнăç хăтлăхĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çыннăн ĕç пулмалла, ăна тивĕçлĕ шалу тӳлемелле, вăл пурнăçра хăйне хăрушлăхсăр туймалла, тавралăх экологийĕ йĕркеллĕ пулнине пĕлсе тăмалла, сывлăх сыхлавĕ тата вĕренӳ паракан лайăх пахалăхлă пулăшусемпе, культура еткерĕпе усă курма пултармалла. Ăнăçлă çын кăна телейлĕ ашшĕ-амăшĕ тата пархатарлă еткерçĕ пулать, çĕр-шыва аталантармалли чăн вăй пулма пултарать. Унсăрăн унăн пурнăçĕ кулленхи йывăрлăхсене çĕнтерессипе çыхăннă асаплă кунçула çаврăнать. Мĕн пур влаç органĕсен, пирĕн пурин те, уйрăмах вара республика Президенчĕн тĕп тĕллевĕ, — пирĕн граждансен пурнăç пахалăхне лайăхлатасси. Мĕншĕн тесен тĕп вырăнта — çын, тĕп тĕллев те — вăлах. «Çынна пани сая каймасть», — теççĕ.

Иртнĕ çул ку тĕлĕшпе эпир пĕлтерĕшлĕ темиçе задачăна татса патăмăр.

Пĕрремĕшĕнчен, **ĕççĕрлĕхе чакарас енĕпе** *эпир виçĕ çул тытăмлăн ĕçлерĕмĕр. Çĕнетекен предприятисенче ĕç вырăнĕсене сыхласа хăварма, кадрсене маларах вĕрентсе хатĕрлеме, хăй ĕçне йĕркелесе яма грантсем пама 3 миллиард та 345 миллион тенкĕ уйăртăмăр. Пĕтĕмпе патшалăх пулăшăвĕ памалли 20 ытла çул-йĕре пурнăçланă.*

Республикăра пурăнакан кашни виççĕмĕш çын çав пулăшупа усă курнă. Эпир ĕç вырăнĕсене сыхласа хăварма тата 93 пин çынна ĕçрен кăларса ярассине сирме пултартăмăр. Чи кирли — патшалăх пултарулăх вăй-халне харпăр хăй тĕллĕн тӳрре кăларма лайăх майсем туса пачĕ. Предпринимательлĕх ĕçĕ-хĕлне йĕркелесе яма кăмăл тунă кирек мĕнле ĕççĕр çын та каялла тавăрса памалла мар йĕркепе 58,8 пин тенкĕрен пуçласа 500 пин тенкĕ таран пулăшу илме пултарчĕ. Çакнашкал майпа 6542 çын усă курчĕ. Пурнăçланă ĕççем ĕççĕрлĕх шайне 1,4 процента çити чакарма май пачĕç, республикăра ĕççĕрлĕх шайĕ чакассин хăвăртлăхĕ Раççей Федерацийĕнчи кăтартупа танлаштарсан икĕ хут ӳснĕ.

Пирĕн ĕç рынокĕнчи çивĕчлĕхĕн коэффициенчĕ те палăрмаллах чакрĕ — ĕç шыракан пĕр çын пуçне пушă икĕ вырăна яхăн. Енчен те кризис тапхăрĕнче пĕр вакансие темиçе çын йышăнасшăн пулнă пулсан, халĕ пачах урăхла лару-тăру, икĕ пушă ĕç вырăнне пĕр ĕççĕр çын тивет, рабочи специальноçĕсем валли вара тата та ытларах. Çав хушăрах çакна палăртатăп: эпир техника профессиучилищисен пурлăхпа техника никĕсне палăрмаллах çирĕплетрĕмĕр. Çавна май халĕ пирĕн граждансем офисра вăй хуракансенчен ытларах укçа-тенкĕ ĕçлесе илме май паракан ĕç специальноçĕсем илме пултараççĕ, çакă вĕсене вĕренӳ çул-йĕрне ăнланса суйласа илмелли майсем туса парать.

Çĕнĕ ĕç вырăнĕсем йĕркелесси *— Правительствăшăн кăна мар, муниципалитет влаç органĕсемшĕн те чи пĕлтерĕшлĕ тĕллев. Эпир кăçал республикăн инвестици илĕртӳлĕхне ӳстерес енĕпе программа йышăнтăмăр, вăл çĕнĕ производствăсене аталантарассине гарантилеме тивĕç, çав производствăсем вара граждансене ĕç вырăнĕсене йышăнма кăна мар, хăйсен пĕтĕм пултарулăхĕпе пĕлĕвне çемье бюджетне пуянлатма, республика пурнăçне лайăхлатмашкăн ĕçлеме майсем уçаççĕ.*

Чăваш Ене 2020 çулччен аталантармалли Стратегире ку енĕпе тĕрлĕ мерăсем палăртса хăварнă. Переченьре — 403 миллиард ытла тенкĕлĕх 95 инвестици проекчĕ. Пĕр çак сфера кăна малтанласа палăртнă тăрăх, 35 пин çĕнĕ ĕç вырăнĕ, çав шутра пысăк технологиллĕ производствăсенче — 10 пин ытла çĕнĕ ĕç вырăнĕ йĕркелеме май туса парать.

Республика пуçлăхĕ пулнă май, хамăн тĕллевĕме предприятисене çĕнĕ саккассем илме май килнĕ таран ытларах пулăшасси, хамăр таварсене тата пулăшу ĕçĕсене Раççей рынокне тухма май туса парасси евĕр куратăп. Çакă пурте республикăри ĕç вырăнĕсене аталантарма та, сыхласа хăварма пулăшĕ.

Тивĕçлĕ ĕç укçи çынна *йĕркеллĕ пурăнма, кил-çуртне хăтлăх кӳме тата кăмăл тĕлĕшĕнчен хăйне лайăх туйма пулăшать. Ку енĕпе Чăваш Ен Правительствин политики пулăшу парассине малалла та çирĕппĕн тытса пыма тĕллев лартать. Бюджет сферинче вăй хуракан мĕн пур ĕçченĕн шалăвне эпир 13 процент чухлĕ ӳстертĕмĕр. Раççей Прези-*

2 стр.

Пĕтĕмпех ҫын валли тата ҫыншăн

(Малалли. Пуҫл. 1 стр.).

денчĕ вĕрентекенсене пулăшас тĕлĕшпе лартнă тĕллеве пурнăҫласа эпир вĕсен ĕҫ укҫине кăна мар, педагогика персоналĕн — педагог-психологсен, социаллă педагогсен, ҫавăн пекех шкулчченхи вĕренӳ учрежденийĕсенче ĕҫлекен воспитательсен — ĕҫ укҫине те 30 процент чухлĕ ӳстертĕмĕр. Икĕ ҫулта сывлăх сыхлавĕнче врачсен ĕҫ укҫи сахалтан та 31 процент, вăтам сыпăкри медицина ĕҫченĕсен вара — 26,4 процент пысăкланмалла.

Патшалăх бизнеса пулăшас енĕпе пурнăҫлакан чылай ĕҫ, Чăваш Ен территорийĕнче хăйсен ҫĕнĕ производствисене тата саккасĕсене вырнаҫтаракан ҫĕр-шыври пысăк корпорацисемпе туслă хутшăнусем йĕркелени экономикăри ĕҫ укҫи шайĕ ҫине активлă майпа витĕм кӳчĕҫ.

Ĕҫ укҫи ӳсессин хăвăртлăхĕпе Чăваш Ен федерацин Атăлҫи округне кĕрекен регионсен хушшинче кăҫал ҫулталăк тăршшĕпех ҫиччĕмĕш вырăнта тăрать, ĕҫ укҫин тулли шайĕпе /Мари Эл тата Мордва республикисенчен иртсе/ — 12-мĕш вырăнта. 6 субъектра кăна халăхăн укҫа-тенкĕн чăн тупăшĕсем ӳсни̇е шута илнĕ. Чăваш Ен ҫак йышра пиллĕкмĕш вырăнта.

Ҫакна палăртмалла: Чăваш Республикинчи организацисен ĕҫченĕсен уйăхри номиналлă ҫырса хунă вăтам ĕҫ укҫин кал-кал улшăнăвĕ самаях кăтартуллă: 2002 ҫултан пуҫласа вăл 5,9 хут ӳснĕ, ĕҫлеме пултаракан халăх валли ҫирĕплетнĕ пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк виҫе вара — 3,6 хут кăна. Ҫав хушăрах ĕҫ укҫи шайĕ, отрасльсем тăрăх илес пулсан, палăрмаллах уйрăлса тăрать, анчах та пирĕн ĕҫ укҫи 40 пинрен те иртекен ĕҫ вырăнĕсен хисепĕ йышланать. Экспертсен хаклавĕ тăрăх, 64 пин ҫын е организацисенче ĕҫлекенсен пĕтĕм йышĕн 17 проценчĕ 25 пин тенкĕ ытла ĕҫ укҫи илет.

Ҫакăн пек факта та палăртатăп. Енчен те ҫулталăк каярах халăха ĕҫпе тивĕҫтерекен службăра ĕҫ шыракансене пĕчĕк шайри — 4,5 пин тенкĕ тӳлекен — ĕҫ вырăнĕсем сĕннĕ пулсан, халĕ вакансисен рынокĕ палăрмаллах улшăнчĕ: ĕҫсĕррисене сĕнекен ĕҫ вырăнĕсен 40 процентĕнчен ытларах пайĕнче 10 пин тенкĕрен пысăкрах ĕҫ укҫи шантараҫҫĕ. Асăннă пушă ĕҫ вырăнĕсен ҫурринче уйăхри ĕҫ укҫи — 15 пин тенкĕ. Ку кăтарту вара экономикăри вăтам ĕҫ укҫи шайĕнчен те кăшт пысăкрах. Апла пулсан ытларах тупăш илес тесен, вĕренмелле тата пулас профессие тĕплĕн шухăшласа суйласа илмелле.

Ял хуҫалăх отраслĕнчи тата вăрман хуҫалăхĕнчи ĕҫ укҫи — уйрăм тема. Ана Раҫҫейри вăтам шая ҫити ӳстерме пирĕн мĕн кирлине пурне те тумалла.

Ĕҫ укҫи енĕпе пуҫтарăннă парăм теми те ҫивĕч шутланать. Шел те, Чăваш Ен ку ыйтупа федерацин Атăлҫи округĕнчи субъектсен хушшинче иккĕмĕш вырăнта тăрать, парăмсен хисепĕ — 106,8 миллион тенкĕ. Анчах та кунта ҫакна палăртмалла: асăннă парăмсен 95,4 проценчĕ конкурслă производство процесне пуҫарнă, урăхла каласан, панкрута тухнă 14 организацин. Тата парăмсен 60 процентне яхăн халь эпир япăх ятпа пĕлекен «САВВА» компанисен ушкăнĕнчи предприятисен. Хальхи вăхăтра Чăваш Республикин Прокуратури тата Чăваш Республикин Росреестр управленийĕ арбитражăн уйăрнă ертӳҫисен ĕҫ-хĕлне тĕрĕслет. Тĕрĕслев вăхăтĕнче вĕсен ĕҫĕ-хĕлĕнчи йĕркене пăснă тĕслĕхсене палăртаҫҫĕ тата хăйсене панă полномочисен шайĕнче тивĕҫлĕ мерăсем йышăнаҫҫĕ.

Кашни гражданинăн пурнăҫ шайне палăртакан тепĕр **фактор сывлăх сыхлавĕ паракан пулăшусен пахалăхĕ тата вĕсемпе усă курма лайăх май пулни** шутланать. Асăрхаттаратăп: ҫав пахалăх граждансен сывлăхĕ ҫине те витĕм кӳрет ҫеҫ мар, республикăри демографи лару-тăрăвне те йĕркелет.

Пĕр енчен, эпир Чăваш Енре ача ҫураласлăха ӳстерес тата халăх вилессине чакарас кăтартусемпе Раҫҫейре чи лайăххисенчен пĕри шутланатпăр. Пурнăҫ тăршшĕн виҫи те пирĕн Раҫҫейри кăтартуран пысăкрах тата эпир ăна сахалтан та 70 ҫула ҫитерме тĕллев лартатпăр. Юлашки ҫулсенче республикăра хальхи вăхăтри диагностика тата сиплев центрĕсем 20 яхăн йĕркеленĕ. Халĕ пирĕн граждансем операци тутарма унччченхи пек ҫĕр-шывăн тĕп хулинчи клиникăсене кайса ҫӳремеҫҫĕ, пысăк ăсталăхлă медицина пулăшăвне Чăваш Енрех илеҫҫĕ, ҫакă вĕсене ҫемье бюджетне перекетлеме май парать. Пирĕн инсульта пула вилесси — 35 процент, инфаркта пула — 15 процент, ҫул-йĕр ҫинчи транспорт инкекĕсенче аманнине пула 8 процент чакнă. Шыҫă чирĕсемпе чирлекенсем чĕрĕ юласси 60 процент ӳснĕ. Иккĕмĕш ҫул Сывлăх центрĕсем ĕҫлеҫҫĕ, вĕсем сывă ҫынсен — аслисене те, ачасене те — сывлăхне упрама пулăшаҫҫĕ, ҫапла майпа граждансене сывă пурнăҫ йĕрки ҫинчен шухăшлама хистеҫҫĕ.

Тепĕр енчен, пирĕн поликлиникăсенчи черетсене пула йывăрлăх палăрать, мĕншĕн тесен малтанласа йышăнакан врачсем хăш чухне ҫитсех каймаҫҫĕ тата ансăр специалистсем енĕпе те ыйту ҫивĕч тăрать. Ҫавна май пирĕн кадрсем ҫитменнипе ҫыхăннă ыйтăва мĕн пур майпа татса памалла. Граждансем черетсенче тата регистратурăра кăна мар, тепĕр чухне врач пӳлĕмĕнче те чунсăрлăхпа тата тӳрккеслĕхпе тĕл пулни палăрать.

Пысăк технологиллĕ медицина пулăшăвĕ сарăлса пыни малтанхи сыпăкри медицина пулăшăвне кая хăварма тивĕҫ мар. Ку тĕлĕшпе сывлăха сыхлас ĕҫе 2 ҫулта модернизацилемелли программа ҫине пысăк шанăҫ хуратпăр. **Ҫак вăхăт хушшинче республикăра 25 медучреждение 4,5 миллиард тенкĕлĕх юсаса лайăхлатмалла, 2 пин ытла единица медицина оборудованийĕ** туянмалла, информацин ҫĕнĕ технологийĕсене ĕҫе кĕртмелле. «Электрон регистратури» урлă врач патне ҫырăнмалли мел пирĕн патра анлă сарăлнă, унпа пĕтĕм республикипе кунне 3 пин ытла пациент усă курать. Ҫапах та эпĕ граждансене врач патне ҫырăнмалли майпа кăна мар, больница сайчĕпе те унти пулăшу пахалăхне витĕм кӳмелли мел пек усă курма сĕнетĕп — сиплев пахалăхĕ ҫинчен хăвăр шухăшăрсене палăртса ҫырăр, сирĕн правăна пăснă тĕслĕхсене пурне те пĕлтерĕр.

Модернизацин пĕлтерĕшлĕ тĕллевĕ ҫавăн пекех медицина пулăшăвĕ памалли стандартсене ĕҫе кĕртесси пулса тăрать. Ҫакă кашни пациентах кирлĕ шайра диагностика тата сиплев пулăшăвĕ илессине гарантилеме кăна мар, ҫавăн пекех тата сиплев тăкакĕсене ӳстерме, граждансене стационарсенче эмелпе тивĕҫтерме, чирлĕ ҫынсене хăйсене эмел тата уйрăм препаратсем туянма сĕнекен тĕслĕхсене пĕтерме пулăшĕ.

Ҫапах та, ман шутпа, модернизацин тĕп тĕллевĕ пӳлĕмсен стенисене юсани тата оборудовани туянни кăна мар, врачпа чирлĕ ҫын хутшăнăвĕсене палăрмаллах улăштарни те пулмалла.

Табак туртассипе, наркоманипе, алкоголизмпа кĕрешес ĕҫре парти тата общество тĕрĕслевĕн пĕлтерĕшне палăртса хăварас тетĕп. Патшалăх политикин сферинче эпир мĕн тумаллине пурне те тăватпăр, ҫапах та общество сиенлĕ ҫак йăласемпе хăй те кирлĕ пек кĕрешмесен эпир чылай ҫамрăк гражданина ҫухатма пултаратпăр, вĕсем вара— Чăваш Ен пуласлăхĕ.

Республика пуласлăхĕ эпир хамăр ачасем ҫине мĕнлерех пăхнинчен тата **вĕренӳ ĕҫĕ-хĕлĕнчен** килет. Асăннă ĕҫ наци вăйхăвачĕн аталанăвĕ, вăл конкуренци хуҫаланакан хутлăхра пурăнма, наукăпа тачă ҫыхăннă производствăсенче ĕҫлеме хатĕр пулнине витĕм кӳрет. Ҫакăн валли республикăра нумай ĕҫ тунă. Пирĕн ачасенчен 92 проценчĕ ытла хальхи условисенче вĕренет.

Шкул ҫурчĕсене тытăмлăн юсас, шкул компьютерĕсене тата автобус паркне ҫĕнетес, хăрушсăрлăх тытăмне аталантарас ĕҫсене малалла тăсăпăр. Эпир ачасене вĕри апатпа тивĕҫтерес ыйтăва тытăмлăн татса парас тесе тăрăшса ĕҫлерĕмĕр, ҫапах та чи сывăх вăхăтрах ачасен апатланăвĕн хальхи вăхăтри индустрине йĕркелемелле. Вăл шкулти апатланăвăн пысăк пахалăхне тата унăн тĕрлĕ енлĕхне тивĕҫтермелле. Шкул инфратытăмне малалла аталантарма муниципалитет районĕсен администрацийĕсен энерги перекетлес, вĕренӳ объекчĕсене юсас енĕпе программăсем туса хатĕрлемелле тата хăйсен сĕнĕвĕсене Чăваш Ен Вĕренӳ тата Финанс министерствисене тăратмалла.

Республикăра ачасене шкулчченхи вĕренӳ учрежденийĕсемпе тивĕҫтерес лару-тăрăва тĕпрен лайăхлатас тĕлĕшпе пурне те тăватпăр. Иртнĕ ҫул валли палăртнă тĕллев те пурнăҫланать. Ҫулталăк ҫурăран пуҫласа 3 ҫула ҫитиччен ачасем пур, пепкисем ача садне ҫӳремен ҫемьесене укҫа тӳлесе саплаштарас енĕпе пилот проекчĕ пурнăҫланать. Хальхи вăхăтра Шупашкарта, Канашра тата Шупашкар районĕнче ҫав пособие 4 пине яхăн ҫемье илсе тăрать, ҫакă асăннă муниципалитетсенчи ача сачĕ паракан пулăшу кирлĕ ҫынсен 85 проценчĕпе танлашать.

Шкулсене юсаса ҫĕнетнĕ шайра 4 пин вырăнлă шкулчченхи 235 ушкăн уҫнă, ҫакă вăтамран **ҫĕнĕ 20 ача сачĕ тăвассипе танлашать.** Кăҫал республикăра юлашки вунă ҫул хушшинче пуҫласа ҫĕнĕ сакăр ача сачĕ тума пуҫланă. Ҫитес ҫул тата 3 пине яхăн вырăн йĕркеленет. 2014 ҫул вĕҫне вара 24 ҫĕнĕ ҫурт тата халь ĕҫлекен ача сачĕсем ҫумне тĕксе 4 ҫурт тума палăртнă. Ҫемье, килти тата уйрăм ҫын тытса тăракан ача сачĕсем тăвассине шута илсен эпир шкулчченхи вĕренӳпе пурте усă курма пултарассипе ҫыхăннă ыйтăва, тĕпрен илсен, татса пама тивĕҫ.

Эпĕ вĕренӳ ĕҫĕн содержанийĕпе ҫыхăннă ҫивĕч ыйту пирки калаҫмастăп. Мĕншĕн тесен республикăра педагогсен самаях креативлă ушкăнĕ ĕҫлет. Эпир нумай ҫĕнĕ пилот проекчĕсене пурнăҫлатпăр, пирĕн пата инҫетрен те вĕренме килеҫҫĕ. Анчах та тепĕр пысăк пĕлтерĕшлĕ ҫивĕч ыйту пур, ун пирки эпĕ маларах, ĕҫсĕрлĕхпе кĕрешесси пирки хускатнă сăмахра асăнтăм. Ку — шкул ачисем хăйсен профессири вырăнне тупасси, экономика валли кадрсем хатĕрлесси, професси пĕлĕвĕ паракан учрежденисенчен вĕренсе тухакансем республикăри ĕҫ рынокĕнче кирлĕ пулнине ӳстересси. Пирĕн ку енĕпе кирлипе сĕнӳ хушшинчи уйрăмлăха 10 процентран ытла мар шая ҫитерме тăрăшмалла /хальлĕхе вăл 55 процентпа танлашать/. Ҫакă професси пĕлĕвĕ паракан шкул темиҫе диплом илекен **выпускниксене кăна мар, чăн пĕлӳллĕ тата чăн ăсталăхлă, конкурентлă специалистсене** вĕрентсе хатĕрлемеллине пĕлтерет.

Чăваш Ен Вĕренӳ министерствин вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе пĕрле никĕс шкулсен, ресурс центрĕсен тата професси пĕлĕвĕ паракан учрежденисен вăй-хăвачĕпе усă курса профиль инженер класĕсем уҫас тĕлĕшпе хастарлăн ĕҫлемелле. Ҫак енĕпе Чăваш Енри лайăх опыта анлăн сармалла. Эпир вара унччченхи пекех ĕҫ паракансемпе пĕрле республикăри организацисене специалистсене ĕҫе тĕллевлĕн вырнаҫтарас енĕпе тăвакан ĕҫе малалла тăсăпăр.

Вĕренӳ ĕҫĕнчен **граждансен хăрушсăрлăхĕ** ҫине куҫнă май, Ҫĕнĕ Шупашкарта ĕҫлеттерсе пăхнă йĕркесĕр ҫемьесен даннăйсен банкĕпе микрорайонăн социаллă карттине тепĕр хут аса илес тетĕп. Мĕншĕн тесен Чăваш Ен Шалти ĕҫсен министерствин ҫула ҫитмен ҫамрăксем тăвакан преступленисен кăтартăвĕ хальлĕхе лайăх шайра мар-ха.

Юлашки ҫулсенче преступленисен шайĕ чакса пынине, вĕсене уҫса парас шай вара 71 процент кăтарту ҫывăхĕнче ҫирĕппĕн тытăнса тăнине пăхмасăрах, граждансен хăрушсăрлăхĕпе ҫыхăннă лару-тăру ҫаплипех пăшăрхантарать. Пирĕн кăтартусем федерацин Атăлҫи округĕнчи тата Раҫҫейри вăтам кăтартуран лайăхрах пулни право йĕркине тивĕҫтерекен тытăмсене лăпланса ларма ирĕк памасть. Граждансен ҫынна тата унăн пурлăхне тапăнасран хӳтĕлекен ĕҫ пахалăхĕпе шайĕ палăрмаллах ӳсессине кĕтме ирĕк пур.

Ҫавăн пекех ҫакна палăртас тетĕп: пурнăҫ пахалăхĕ лайăхланнăран уйрăм ҫынсем тытакан автотранспорт шучĕ пысăкланни ҫул-йĕр ҫинчи траспорт инкекĕсен йышне ӳстерет. Вĕсенче вара водительсем кăна мар, ҫуран ҫӳрекенсем те вилеҫҫĕ, аманаҫҫĕ. Ҫак цифрăсем пирки шухăшласа пăхма ыйтатăп: кăҫал кăна ҫул-йĕр паравилине пăснă 310 пин ытла тĕслĕхе тупса палăртнă, руль умне ӳсĕр пуҫпа ларнă тăватă пин ытла ҫынна административлă майпа явап тытарнă! Патшалăх Думин ҫĕнĕ йышĕн депутачĕсене ҫакăн пек наказ парас килет — ҫул-йĕр правилисене пăснăшăн тытаракан яваплăха тата та ҫирĕплетмелле.

Сăмах май, Раҫҫей Федерацийĕн шалти ĕҫсен министрĕ Рашид Гумарович Нургалиев пирĕн республикăна визитпа килни эпир тĕрĕс ҫулпа пынине ҫирĕплетрĕ. Чăваш Енре пурнăҫланакан «Хăрушлăхсăр хула» программа йĕркене пăсакансемпе чи тĕрĕс майпа — ҫулсем ҫине сăнакан камерăсем вырнаҫтарнине пула пĕтĕмĕшле тĕрĕслев йĕркелесе — тухăҫлăн кĕрешме пулăшать. Эпир тĕп хулана икĕ ҫул хушшинче ҫĕнĕ оборудованипе тивĕҫтерме хамăр ҫине обязательствăсем илтĕмĕр тата пирĕн программăра палăртнă пĕтĕм ĕҫе пурнăҫламалла.

Преступлени тăвасси, ĕҫкĕпе иртĕхни тата хулиганлăх чăн малтанах чунсăрлăхпа ҫыхăннă. Ăс-хакăла йĕркелесси вара— кăткăс тата вăрах ĕҫ, унта хутшăнакан та чылай — ҫемье, шкул, культурăпа кану институчĕсем. Модернизаци ĕҫне пурнăҫа кĕртнĕ май вĕсен статусĕ ӳсет, вĕсене экономикăна аталантармалли ресурс, социаллă ҫирĕплĕх факторĕ тата территори имиджĕ пек хаклаҫҫĕ. Пирĕн мĕн пур ял тăрăхĕсенче культура ыйтăвĕсемпе ҫине тăрса ĕҫлемелле, ҫĕр ҫинче пурăнакан мĕн пур халăхăн культура еткерне пропагандăламалли кашни майпах усă курмалла.

Кăҫал пирĕн пата библиотекăсене аталантарассипе ҫыхăннă чăваш опычĕпе паллашма пĕтĕм Раҫҫей килчĕ. Информаципе ҫыхăнăвăн ҫĕнĕ хатĕрĕсем аталанса пынине пăхмасăр, библиотекăсем, уйрăмах ялсенче, халăхăн пысăк пайĕшĕн пĕлтерĕшлĕ центрсем пулса тăраҫҫĕ. Пирĕн тĕп тĕллев — **халăх культура ырлăхĕсемпе тата пулăшăвăн мĕн пур тĕсĕпе** ирĕклĕн тата пĕр тан усă курма пултарассине тивĕҫтерме майсем туса парасси.

Культура министерствине отраслĕн Аталану концепцине туса хатĕрлеме хушатăп, унта пурлăх аспектне кăна мар, чăн малтанах, хальхи чĕлхепе каласан, ҫынна ăс-хакăлпа кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен воспитани памалли пĕтĕм тренда, республика территорийĕнче ĕҫлекен культурăн мĕн пур институчĕн малашлăхри ĕҫне шута илмелле.

Культурăна пулăшассине вăйлатмалла. Анчах та ҫак ĕҫре тăрăшакансем хăйсем те гуманитари программисен пĕлтерĕшне лайăх ăнланаҫҫĕ. Пирĕн музейсенче нумай ачаллă ҫемьесем, инвалидсем, ачасем тата пенҫионерсем ятарлă ҫăмăллăхсемпе усă кураҫҫĕ. Кураканпа, вулаканпа хутшăнса ĕҫлемелли ҫĕнĕ майсем аталанаҫҫĕ. Ҫавнашкал «искусствăпа ятран сиплени», енчен те ҫак ĕҫе професси тивĕҫĕпе кăна мар, пĕтĕм чун-чĕререн тусан ăнăҫлăхпа палăрма тивĕҫ.

Патшалăх ăс-хакăл ĕҫне пулăшма пултаракан мĕн пур вырăнта пирĕн пурин те тăрăшса ĕҫлемелле. Паян ачасене телевизор экранĕнчен, вĕҫсĕр-хĕрсĕр Интернетран йăтăнса тухакан япăх витĕмрен хӳтĕлеме питех те йывăр. Ҫавăнпа та наци пуласлăхĕн ăс-хакăл сывлăхне упраса хăварас тесен пирĕн ашшĕ-амăшĕн яваплăхне ӳстермелле.

Ҫыншăн **сывă пурнăҫ йĕркине тытса пыма май пулни те** пысăк пĕлтерĕшлĕ. Чăваш Ен физкультурăпа спорта аталантарас, спорт шкулĕсен йышĕпе, ҫĕр-шыври пĕрлештернĕ командăсен членĕсен хисепĕ енĕпе малтисенчен пĕри шутланать. 2010 ҫул пĕтĕмлетĕвĕ тăрăх эпир физкультурăпа тата спортпа туслă граждансен йышĕпе Раҫҫей Федерацийĕн субъекчĕсен хушшинче виҫҫĕмĕш вырăнта тăратпăр /пирĕн кăтарту 27,9 процент, Раҫҫейри вăтам кăтарту — 18,5 процент/. Пирĕн тĕллев — 2020 ҫул тĕлне ку кăтартăва 40 процента ҫитермелле.

Ҫакăн валли эпир майсем йĕркеленĕ: ҫитес ҫул вĕҫнелле республикăн мĕн пур районĕнчех физкультурăпа спорт комплексĕсем ĕҫлеме пуҫлаҫҫĕ. Черетре — футбол уйĕсем тата стадионсем тăвасси, пур пек спорт сооруженийĕсене юсаса ҫĕнетесси. Тата чи кирли — эпир Чăваш Ен тĕп хулинче виҫҫĕрен кая мар ФСК тума тĕллев лартатпăр. Хулара пурăнакансем хăйсемшĕн тата хăйсен ачисемшĕн ҫавăн пек майсене тахҫантанпах кĕтеҫҫĕ ĕнтĕ. «Газпром» АУО ертӳҫисен йышăнăвĕпе тата «Пĕрлĕхлĕ Раҫҫей» политика партийĕ пулăшнипе республикăн тĕп хулинче **7500 ҫын вырнаҫмалăх, икĕ катоклă** тата машинăсем лартмалли вырăнлă нумай ĕҫхĕллĕ хальхи вăхăтри **Пăр керменĕ** тума пуҫланă. Проект хакĕ — 1 миллиард та 200 миллион тенкĕ. Ку объекта 2013 ҫулхи Ҫĕнĕ ҫул тата Раштав уявĕсем тĕлне хута ямалла.

Халăх пурнăҫне лайăхлатас тĕллев республикăн пĕрлештернĕ бюджечĕн укҫи-тенки шутне ӳстерме хистет. Ҫавна май патшалăх органĕсен тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен ҫакна пурнăҫлама сахалтан та икĕ ĕҫе тивĕҫтермелле: налук тӳлекенсен укҫи-тенкипе тухăҫлă усă курмалла тата республика территорийĕнче бюджет майĕсене ӳстермелли ҫĕнĕ тупăшсем тума хастарлăн пулăшмалла.

Общество финанс тытăмне реформăласинче малтисем пулнă май, эпир Раҫҫейри чи усăмлă финанс тытăмĕн ятне тивĕҫрĕмĕр, бюджет йĕркелемелли программа-тĕллев мелĕсем енĕпе ҫĕнĕ норматив-право никĕсне йышăнтăмăр, вăл вара каярах Раҫҫей Федерацийĕн Бюджет кодексĕн нормисен йышне кĕчĕ. ***Эффективлăхăн пĕтĕмĕшле шайĕпе Чăваш Ен Раҫҫей регионĕсен хушшинче малти пилĕк лидер йышĕнче.***

3 стр.

Пӗтӗмпех ҫын валли тата ҫыншӑн

(Малалли. Пуҫл. 1, 2, 3 стр.).

Эпир ҫавӑн пекех ҫӗр-шывра пӗрремӗш пулса Чӑваш Республикин патшалӑх программисене туса хатӗрлесси, пурнӑҫласси тата хакласси ҫине ҫӗнӗлле пӑхассине ӗҫе кӗртрӗмӗр. Программӑсен шайӗнче йӗркеленекен республика бюджечӗн тӑкакӗсен танлаштаруллӑ виҫи 74,5 яхӑн процентпа танлашнӑ. Тӑкаксене планламалли ҫавнашкал тытӑма пирӗн муниципалитет шайӗнче те ӗҫе кӗртмелле тесе шухӑшлатпӑр. Бюджет тӑкакӗсен пахалӑхӗпе тухӑҫлӑхне тата та ӳстерес тесен вара пирӗн 2012 ҫултан пуҫласа муниципалитетсенче те виҫӗ ҫуллӑх бюджетсем ҫине куҫмалла. Ҫавнашкал тӗплӗн планлани федераци влаҫ органӗсемпе регион влаҫ органӗсем, ҫавӑн пекех регионсемпе муниципалитетсен хушшинчи полномочисене уйӑрассине лайӑхлатма май парать. Ҫакӑ бюджетсене шайлаштарас тӗлӗшпе тӑвакан ӗҫре ҫав тери пысӑк пӗлтерӗшлӗ.

Эпир хамӑрӑн тӗп программӑн, Чӑваш Республикин Социаллӑ пурнӑҫпа экономика аталанӑвӗн 2020 ҫулчченхи стратегийӗн, положенийӗсене тепӗр хут пӑхса тухса ҫӗнетрӗмӗр. Унӑн тӗп тӗллевӗ – экономикӑн конкуренци пултарулӑхне пысӑклатса тата ӑна кал-кал аталантарса халӑх пурнӑҫӗн пахалӑхне тата ытлӑх-ҫитлӗхне ӳстересси. Ҫӗнетнӗ стратегире инновацисене, нано- тата биотехнологисене хӑвӑрт аталантарассине, энерги тухӑҫлӑхне, ресурссене перекетлессине, ҫынна хывакан инвестицисене тӗп вырӑна хунӑ.

Ҫын капиталне хывакан тухӑҫлӑ технологисен шутне республика гражданӗсене пулӑшас енӗпе тӑвакан ӗҫе кӗртетӗп.

Раҫҫей Федерацийӗн Президенчӗ тата Раҫҫей Правительствин Председателӗ Тӑван ҫӗр-шыв ырлӑхӗшӗн вӑрах вӑхӑт ӗҫленӗ, халӗ унран пулӑшу кӗтекен ҫынсене тата паян ачасем пӑхса ҫитӗнтерсе патшалӑх вӑй-хӑватне ӳстерекенсене – нумай ачаллӑ тата ҫамрӑк ҫемьесене социаллӑ хӳтлӗх памалли политикӑна хастарлӑн пурнӑҫа кӗртеҫҫӗ.

Юлашки 10 ҫулта ватлӑхпа паракан ӗҫ пенсийӗн вӑтам виҫи улттӑ хут ӳсрӗ. Социаллӑ пенсин вӑтам виҫи пенсионера пурӑнма кирлӗ республикӑра ҫирӗплетнӗ чи пӗчӗк виҫерен пысӑкрах. Ҫитес ҫул ӗҫ пенсийӗсене тата 9,6 процент чухлӗ индексацилеҫҫӗ. Чӑваш Енре ӗҫлеме пултаракан ӳсӗмрен аслӑрах граждансен 80 проценчӗ хушма социаллӑ пулӑшу илсе тӑрать. Ҫак тӗллевсем валли республика бюджетӗнчен кӑҫал 1 миллиард та 590 миллион тенкӗ уйӑрнӑ, тепӗр ҫул вара – 1 миллиард та 786 миллион тенкӗ /ӳсӗм 12,3 процент/. Сӑмах май, финанс кризисӗн условийӗсенче тӗнчери пӗр ҫӗр-шыв та пенсионерсене ҫавнашкал пулӑшу пама палӑртакан йышӑнусем туман.

Юпа уйӑхӗнче эпир пӗлтерӗшлӗ тепӗр йышӑну турӑмӑр – «Чӑваш Республикин ӗҫ ветеранӗ» ята илме право пур граждансен ушкӑнӗсен йышне ӳстертӗмӗр. 26 пин пенсионер республика бюджечӗн укҫи-тенки шучӗпе социаллӑ пулӑшу илӗ. Указа пурнӑҫланине шута илсен Чӑваш Енре пурӑнакансен 20 проценчӗ /кашни пиллӗкмӗш ҫын/ республика тата федераци бюджечӗсенчен социаллӑ пулӑшу илме пуҫлӗ. Иккӗмӗш тапхӑр – ҫав ӳсӗме арҫынсемшӗн 40, хӗрарӑмсемшӗн 35 ҫула ҫити чакарасси – республика экономики, урӑхла каласан, эпир пурте тухӑҫлӑ ӗҫлесе пырсан чи сывӑх вӑхӑтрах пурнӑҫа кӗрӗ.

Раҫҫей Президенчӗ Тӑван ҫӗр-шывӑн Аслӑ вӑрҫин ветеранӗсене, вӑрҫӑра вилнӗ тата вилнӗ вӑрҫӑ участникӗсен ҫемйисен членӗсене пурӑнмалли ҫурт-йӗрпе тивӗҫтерес ыйтӑва пысӑк вырӑна хурать. Чӑваш Енре 3820 ҫынна пурӑнмалли ҫурт-йӗрпе тивӗҫтернӗ ӗнтӗ, ҫитес ҫул ку ыйтӑва татса паратпӑр. Эпир ҫавӑн пекех тӑлӑх ачасене тата нумай ачаллӑ ҫемьесене пурӑнмалли ҫурт-йӗрпе тивӗҫтерсе курӑмлӑ пулӑшу кӳтӗмӗр. Нумай ачаллӑ ҫемьесене ҫӗр лаптӑкӗсемпе тивӗҫтерес ыйтӑва эпир Атӑлҫи федераци округӗнче пуринчен те активлӑрах татса паратпӑр.

Ҫак кунсенче эпӗ республикӑн амӑшӗн капиталӗ ҫинчен калакан Указа алӑ пусрӑм. Ҫемьери виҫҫӗмӗш ача Чӑваш Ен бюджетӗнчен 100 пин тенкӗлӗх пулӑшу илме ирӗк парать. Ҫӗнӗ ҫултан пуҫласа федерацин амӑшӗн капиталӗн виҫи – 387 пин тенкӗ. Республикӑн амӑшӗн капиталӗ нумай ачаллӑ телейлӗ ҫемье йӗркелеме патшалӑх енчен сӗнекен хушма хавхалантару шутланать, ҫавна май эпӗ кӗтнӗ ачасем ҫураласса шанатӑп.

Ку‹тӗлӗшпе патшалӑх ҫамрӑксене кӳрекен пулӑшу та кӑтартуллӑ. Кӑҫал 1600 ытла ҫын хӑйсен ӗҫне йӗркелеме субсидисемпе грантсем илнӗ. Вӗсене ҫурт-йӗр ыйтӑвне татса пама та активлӑн пулӑшатпӑр. 2003 ҫултан пуҫласа Чӑваш Енре ялӑн социаллӑ аталанӑвӗн программи шайӗнче халӗччен пулман пулӑшу паратпӑр: 35 ҫултан аслӑ мар ҫамрӑк ҫемьесене тата специалистсене пурӑнмалли ҫуртӑн шутласа палӑртнӑ хакӗн 70 процентне, ыттисене – 45 процентне саплаштаратпӑр. 2011 ҫулта пӗрремӗшсене тӳленӗ социаллӑ тӳлевӗн вӑтам виҫи 585 пин тенкӗпе, иккӗмӗшсен вара – 360 пин тенкӗпе танлашнӑ. Кӑҫал эпир «Пурӑнмалли ҫурт-йӗр» программӑна ҫӗнӗрен йышӑнтӑмӑр, унпа килӗшуллӗн субсидисен виҫи, ҫемьере миҫе ача пулнине кура, 35 процентран пуҫласа 45 процентпа танлашать.

Патшалӑхӑн пурӑнмалли ҫурт-йӗр фончӗн проектне хутшӑнакан граждансене паракан социаллӑ пулӑшу та пӗлтерӗшлӗ – кунти ҫурт арендин хакӗ пурӑнмалли ҫурт-йӗрӗн уйрӑм ҫын рынокӗнчи хакран ик-виҫӗ хут сахалрах. Ку программа тӑрӑх эпир бюджет сферинче ӗҫлекенсене тата ҫамрӑк ҫемьесене, вӗсен йышӗ программӑна хутшӑнакансен 60 проценчӗнчен кая мар, пулӑшатпӑр. Пирӗн ипотека енӗпе пулӑшу памалли темиҫе май пурнӑҫланать. Ипотека кредичӗсене кӑҫал виҫӗ миллиард ытла тенкӗлӗх панӑ. Кӑҫалхи юпа уйӑхӗнче вара эпӗ шӑпах кивҫен илекен ҫамрӑк ҫемьесене хушма пулӑшупа тивӗҫтерекен, вӗсене кредит линине 10 ҫула ҫулталӑкне 5,5–7% шайпа, ҫакӑ рынокри ставкӑсенчен икӗ хут сахалрах, йӗркелеме май паракан Указа алӑ пусрӑм. Патшалӑх сӗнекен ҫак майпа 6,5 пин ҫемье /ку вӑл ҫавнашкал пулӑшӑва илес текенсен 40 %/ усӑ курма пултарать.

Сӑмах май, тепӗр хут палӑртатӑп: Чӑваш Енре хулапа ял хушшинчи уйрӑмлӑха, пиретем пек шантарнӑччӗ пулсан та, совет саманинче мар, халӗ, экономикӑшӑн чи йывӑр ҫулсенче пӗтертӗмӗр. Ҫын пурнӑҫне ҫӑмӑллатакан питӗ лайӑх инфратытӑм йӗркеленӗ, ваттисем калашле, пурӑн, ӗҫле тата ҫитӗнӳсемшӗн савӑн!

Патшалӑх хулари ҫулсене тата картишсене йӗркене кӗртес ыйту ҫине пачах урӑхла пӑхма пуҫланине те палӑртса хӑваратӑп. Кӑҫал ҫулла «Раҫҫей хулисенчи ҫӗнӗ ҫулсем» проект шайӗнче Чӑваш Ен федераци бюджетӗнчен 344,8 миллион тенкӗ илчӗ, ҫакӑ юсав ӗҫӗсем ирттермелли картишсен хушшинчи ҫулсене тата тӑкӑрлӑксен 40 % юсама, Калинин урамне юсаса ҫӗнетме май пачӗ. Шупашкарта пурӑнакан ачасем валли вара ача-пӑчан 109 спорт хулашне йӗркеленӗ. Ку ӗҫе малалла тӑсӑпӑр, ҫав шутра республикӑра йӗркеленекен, туса хумалли саккуна хатӗрлесе ҫитернӗ Ҫул-йӗр фондӗнчен укҫа-тенкӗ уйӑрса та.

Граждансене паракан хӳтлӗх хыҫҫӑн патшалӑхӑн чи пӗлтерӗшлӗ тепӗр тӗллевӗ, ман шутпа, – экономика рынокне хутшӑнакансене пулӑшасси.

«Йӗркесене пӑхӑнса вылякан» тата хӑвӑрт тупӑш илме кӑна тӗллев лартман, хӑй ӗҫлекен территорие аталантарас тӗлӗшпе хӑйӗн социаллӑ яваплӑхне /ку вара налуксене тӳрӗ кӑмӑлпа тӳлемеллине, ҫӗнӗ ӗҫ вырӑнӗсем йӗркелемеллине, хӑйӗн ӗҫченӗсене тивӗҫлӗ ӗҫ укҫи тӳлемеллине пӗлтерет/ туякан бизнес патшалӑх пулӑшӑвне илме тивӗҫ.

Асӑннӑ пулӑшу пирӗн тӳрӗ инвестицисем хывнинче, налук ҫӑмӑллӑхӗсем панинче, ҫавӑн пекех укҫапа сыхӑнман пулӑшу майӗсемпе тивӗҫтернинче палӑрать. Эпир административлӑ чӑрмавсене сирмелли ятарлӑ программа йышӑнтӑмӑр, Шупашкарти нумай функциллӗ центр та хӑйне лайӑх енчен кӑтартрӗ, унта халӑха тата организацисене патшалӑх тата муниципалитет паракан 320 ытла пулӑшу ӗҫӗпе тивӗҫтереҫҫӗ. Ҫулталӑк вӗҫӗччен ҫавнашкал центр Ҫӗнӗ Шупашкар, Улатӑр хулисенче хута каять, ку енӗпе тата 17 муниципалитет пӗрлӗхӗнче ӗҫ пуҫланӑ.

«Чӑрмавсӑр» экономика хутлӑхне туса хурассинче муниципалитет шайӗнче те, регион шайӗнче те пӗрле хутшӑнса ӗҫлемелли мӗн пур мая ҫырса палӑртнӑ административлӑ регламентсене йышӑнни пысӑк пӗлтерӗшлӗ. Тӳрӗ мар кӑмӑллӑ инвестортан сыхланмалли лайӑх мел вара малтанласа килӗшӳсем тӑвас шайри яваплӑ ӗҫ пулса тӑмалла, ҫав килӗшӳсенче енсен тивӗҫӗсене уҫҫӑн та ӑнланмалла ҫырса палӑртмалла. Ҫапла тусан нимле йывӑрлӑх та пулмасть.

Чӑваш Ен экономикишӗн никӗсри тытӑм – пӗчӗк тата вӑтам бизнес. **Юлашки икӗ ҫулта мӗн пур бюджетӑн укҫи-тенки шучӗпе паракан патшалӑх пулӑшӑвӗ икӗ хут ӳсрӗ тата 300,3 миллион тенкӗпе танлашрӗ.** Гаранти фондне туса хунӑ, вӑл банксене 60 яхӑн гаранти уйӑрса панӑ, Кредитсем паракан агентство та хастар ӗҫлет, унта предприниматель 1 ҫул таран вӑхӑта 1 миллион тенке ҫити кредит илме пултарать. Кӑҫал 260 займ панӑ, агентство филиалӗсене Канаш, Улатӑр, Ҫӗнӗ Шупашкар хулисенче уҫнӑ.

Ҫавӑн пекех 300 пинрен пуҫласа 1 миллион тенкӗ таран пулӑшу памалли грант системи ӗҫлет тата организацисемпе предпринимательсен тӑкакӗсен пӗр пайне 5 миллион тенкӗ таран субсидилессине йӗркеленӗ. Пӗчӗк предпринимательлӗх кунӗсене мӗн пур хулапа районтах ирттереҫҫӗ, консультаци пулӑшӑвӗ парас ӗҫ йӑлана кӗнӗ. 2012 ҫулта Элӗкпе Муркаш салисенче тата 2 бизнес-инкубатора хута яратпӑр. Пӗчӗк тата вӑтам бизнес организацийӗсене пысӑк ӑсталӑхлӑ кадрсемпе тивӗҫтерес тӗллевпе 2012 ҫултан пуҫласа Чӑваш Енре пӗчӗк тата вӑтам предприятисене вӗренӳ ӗҫӗсемшӗн тӳлеме субсидисем уйӑрса пама палӑртнӑ.

Чӑваш Ен харпӑр хӑй хушма хуҫалӑх тытакансене пулӑшас енӗпе Раҫҫейре малта пырать. Агропромышленноҫа аталантармалли наци проектне пурнӑҫлама тытӑннӑранпа Чӑваш Енри ҫемьесен 30 проценчӗ хӑйсен хуҫалӑхне аталантарма ҫӑмӑллӑхлӑ кредитсемпе усӑ курчӗ. Юпа уйӑхӗн 1-мӗшӗ тӗлне явӑҫтарнӑ кредитсен хисепӗ пӗлтӗрхи ҫак вӑхӑтрипе танлаштарсан 2,3 хут ӳссе 2 миллиард та 271,7 миллион тенкӗпе танлашнӑ. Явӑҫтарнӑ укҫа-тенкӗн пӗтӗмӗшле калӑпӑшӗ вара 11,3 миллиард тенкӗ ытла. Ял ҫӗрӗнчи кил хуҫалӑхӗсен пур пек ресурсӗсен кил хуҫалӑхӗнчи пӗр ҫын пуҫне уйӑхра тивекен виҫи 3 хут ӳсрӗ. Эпӗ ҫакӑ таврӑнми истори ҫӗнлӑхӗ пулнине, вӑл хресчен психологийӗпе шухӑшлавне, производство культурине улӑштарма пулӑшнине ҫирӗппӗн шанатӑп.

Ҫавнашкал хӑвӑртлӑха малалла та тытса пыма тӗллев лартатӑп. Пӗчӗк тата вӑтам предпринимательлӗхре вӑй хуракан ӗҫченсен пайӗ 32 процента яхӑн шая, регионти пӗтӗмӗшле продуктри вӗсен продукцийӗн пайӗ 14 процента ҫити ӳсмелле. Вӑтам бизнесӑн республикӑри мӗн пур пысӑк проекта тата мӗн пур отрасле хутшӑнмалла. Чи кирли – Чӑваш Ен гражданӗсем пурнӑҫра хастарлӑхпа палӑрса тӑмалла. Халӑх калашле: «Ху ӗҫлеме ӳркенсен турӑ телей парас ҫук». **Халӗ пирӗн пысӑк предприятисем тата паллӑ брендсем ҫинчен.** «Пӗрлӗхлӗ Раҫҫей» съездӗнче ҫӗр-шыв Президенчӗ Д.А.Медведев палӑртса хӑварнӑ тӑрӑх, экономикӑна тата социаллӑ пурнӑҫа ҫӗнетни вӑл – эпир асап урлӑ иртсе тупнӑ ҫул-йӗр. Ҫӗр-шыва индустриализацилемелли ҫӗнӗ форма кирлӗ, ҫавнашкал ҫӗнетӗвӗн пӗрремӗш ӳсӗмӗсем, паллах, пур ӗнтӗ, эппин, ку енӗпе савӑнмалли те ҫук мар. Ҫапах та хальлӗхе татса паман ыйтусемпе йывӑрлӑхсем те чылай-ха.

Паллах, ахаль ҫын хӑш чухне предприяти харпӑрлӑхҫи е унччченхи завод вырӑнӗнче суту-илӳ центрӗ ӳссе ларнине ҫеҫ асӑрхать, мӗншӗн тесен ҫакӑ тӳрех куҫа курӑнать. Ытларах чухне промышленноҫ пӗтсе пырать текен общественноҫ шухӑшӗ ҫавнашкал ҫиелтен хак панинчен йӗркеленет. Предприяти кирлӗ продукци кӑларса тата хысна тултарса йӗркеллех ӗҫлени вара ҫав предприяти ӗҫченӗсемпе вӗсен ҫемйисем ҫеҫ пӗлеҫҫӗ. Эпӗ каларӑм ӗнтӗ – эпир продукци калӑпӑшӗ енӗпе кризисченхи шая ҫитнӗ. Пирӗн тупӑшлӑ ӗҫлекен тирпейлекен производствӑсен тупӑшӗ пӗлтӗрхи ҫак тапхӑрпе танлаштарсан 1,7 хут ӳснӗ.

Чӑваш Ен паян чылай отрасль центрӗ шутланать. Шупашкарти электроаппарат заводӗнче, «АБС электро», «ЭКРА» предприятийӗсенче тата ытти предприятире инноваци продукцийӗ туса кӑларнине пула электротехника отраслӗ хӑватлӑн аталанать. Чӑваш Енре вырнаҫнӑ «Трактор завочӗсем» Концерн предприятийӗсенче производствӑна роботсемпе тивӗҫтерес тӗлӗшпе пысӑк ӗҫ тӑваҫҫӗ, ҫавна пула Шупашкар – йывӑр машиностроени центрӗ тата Раҫҫейри вакунсем тӑвакан центрсенчен пӗри.

Чапа тухнӑ «Элара», ҫакна кӑҫалхи Пӗтӗм тӗнчери авиаципе космос салонӗ те ҫирӗплетрӗ, – мухтанмалли япала. Предприятире туса хатӗрленӗ навигаци модулӗ тӗнчере никам тума пултарайман пилотажа пурнӑҫлама пай парать. Ҫакӑ – предприяти юлашки вӑхӑтра туса хатӗрленӗ сайра тӗл пулакан ӗҫсенчен пӗри кӑна. Нумаях пулмасть ҫеҫ йывӑр лару-тӑрӑва ӳкнӗ «Шупашкарти В.И. Чапаев ячӗллӗ производство пӗрлешӗвӗ» пиротехника холдингӗн йышне кӗчӗ, ҫитес вунӑ ҫул хушшинче кунта тӗпрен ҫӗнетӳ иртмелле. Раҫҫей Правительстви ҫӗнӗ йӗркесем тӑрӑх гарантилекен виҫӗ ҫуллӑх патшалӑх саккасӗ Раҫҫейри пӗтӗм «оборонкӑна» малашлӑхалла шанчӑклӑн пӑхма май парать.

Раҫҫейре ҫул-йӗр строительствине икӗ хут ӳстерни, транспорт машиностроенине аталантармалли стратегие пурнӑҫлани те пирӗн предприятисене ҫирӗппӗн аталантарма тата вӗсем туса кӑларакан продукцие туянассине ӳстерме пулӑшать. Сӑмах май, нумаях пулмасть Раҫҫей Транспорт министерствинче иртнӗ тӗл пулусем Чӑваш Енри ҫӗнӗ стройкӑсен бюджетне укҫа-тенкӗ пырса кӗрессине самаях ӳстерме май пачӗҫ. Сӑр юхан шывӗ урлӑ хывмалли кӗпер строительствине вӗҫлесси, федераци ҫулӗсене анлӑлатас ӗҫе хутшӑнни, ҫав ҫулсем ҫинчи халӑх пурӑнакан вырӑнсене ҫутӑпа тивӗҫтерни, ҫавӑн пекех Чӑваш Ен тӗп хулине пырса кӗмелли вырӑнсене юсаса ҫӗнетни тата ҫутатни – ҫакӑ пӗтӗмпе 5 миллиард ытла тенкӗ инвестици парать.

Паянхи кун чи кирли – Чӑваш Ен территорийӗнче ҫӗнӗ производствӑсене аталантарасси, ҫӗнӗ «локомотивсем» йӗркелесси. Ку тивӗҫ ҫӑмӑл мар, унпа аталанма лайӑх майсем, хӑйӗн валли ҫӗнӗ лаптӑксем шыракан бизнес кӑна та мар, Чӑваш Ен Правительстви те ӗҫлет, унпа ҫавӑн пекех республикӑн муниципалитечӗсем те ӗҫлемелле. Промышленноҫ производствин ӳсӗмне стратегилле ӗҫтешсемпе – РОСНАНОпа, «Раҫҫей чукун ҫулӗсемпе», «Газпромпа», «Росатомпа», «Русгидропа», автопром, энергетика тата нефтьпе газ комплексӗн предприятийӗсемпе – ҫыхӑнса ӗҫлессине анлӑлатни пулӑшать. Вӗсем валли туса кӑларакан продукци калӑпӑшӗ республикӑри машиностроени предприятийӗсем тиесе ӑсатнӑ продукцин 60 процентне яхӑн шайпа танлашать. Пирӗн нанотавар туса кӑларакан никама пӑхӑнман 9 производителе палӑртнӑ, биотехнологисем енӗпе ӗҫ хастар пырать.

Икӗ ҫул каярах «Хӗвел» ТМЯО пурнӑҫлама пуҫланӑ «Ҫӳхе пленкӑсем» технологи никӗсӗ ҫинче туса кӑларакан хӗвел батарейисем» проект ҫумне кӑҫал РОСНАНО «Гален» тулли мар яваплӑ обществӑпа пӗрле ҫӗнӗ продукци – базальт чӗлкӗмӗсемпе ҫирӗплетнӗ нанотытӑмлӑ композици полимерӗ – туса кӑларассине ырланӑ проект хушӑнать. Унпа пурӑнмалли ҫурт-йӗрпе коммуналлӑ хуҫалӑхра тата Раҫҫейри строительство отраслӗнче, НППП ҫӗр-шывӗсенче тата Европӑра усӑ кураҫҫӗ. Енчен те пӗрремӗш тӗслӗхре производство ют ҫӗр-шывра туса кӑларнӑ технологисене тӗпе хурать пулсан, ҫӗнӗ проект никӗсне Чӑваш Республикинчи инноваторсен ушкӑнӗ туса хатӗрленӗ ӗҫсене хунӑ. Ӑна 21-мӗш ӗмӗр проекчӗ теме пулать, мӗншӗн тесен вӑл унпа усӑ куракансемшӗн ҫавнашкал хальхи тӗслӗхсенчен 15 процент йӳнерех пулать.

Шанатӑп: часах промышленноҫӑн ытти проекчӗн продукцийӗ – трансформаторсем /«Ҫӗмӗрлери ятарлӑ автомобильсен завочӗ» АУО/, органикӑллӑ мар хими хутӑшӗсем /«Аурат СВ» ТМЯО/, ҫурма прицепсемпе чукун ҫул вакунӗсем /«Шупашкарти «Ҫеҫпӗл» предприяти» АХО, «Промтрактор-вакун» АХО/, хӳтӗлевӗн микропроцессор хатӗрӗсем /«ВНИИР» АУО, «ЭКРА» НПП ТМЯО/, строительствӑра усӑ куракан хутӑшсем /«Улатӑрти сӑрт-ту комбиначӗ» ТМЯО/, производство хӑвачӗсене ӳстерсе туса кӑларакан таварсем /«Шупашкарти вӑй элетрооборудованийӗн «Электросила» завочӗ» АХО, «Шупашкарти электротехника тата автоматика» ТМЯО/, ҫавӑн пекех тирпейлекен ҫӗнӗ предприятисен продукцийӗ – лизин /«ЧувашАгроБио» АХО/, «Develey» нимӗҫ фирми хатӗрлекен кетчуп, комбикормсем /«Юрма» агрохолдинг»/, биохутӑшсем /«Синтез Агро» ТМЯО тата «Агропромгаз» ТМЯО/ – Чӑваш Енӗн ҫӗнӗ бренчӗсем пулса тӑрӗҫ.

Ҫак тата халь ҫӗкленекен ытти предприяти республикӑн экономикӑн пахалӑхлӑ ӳсӗмне тивӗҫтермелле. Пысӑк промышленноҫ предприятийӗсен ытларах территорийӗнче тунӑ технопарксем сывӑх ҫулсенче производствӑн ҫӗнӗ пахалӑхлӑ тытӑмне йӗркелеҫҫӗ. Ҫавна май эпӗ хамӑрӑн ҫӗнӗ предприятисенче ӗҫлеме пысӑк ӑсталӑхлӑ специалистсем хатӗрлес тӗлӗшпе вӗренӳ учрежденийӗсем умӗнче тӑракан тӗллев патне тепӗр хут таврӑнатӑп. Юлашки виҫӗ ҫулта аслӑ шкулсенче халӗ кирлине шута илекен 19 ҫӗнӗ специальноҫ уҫнӑ пулин те – ку питӗ сахал, И.Н. Ульянов ячӗллӗ ЧПУ, Иоффе ячӗллӗ Физикӑпа техника институчӗ тата «Хӗвел» ТМЯО хушшинчи преподавательсене тата студентсене пӗрлехи майпа вӗрентсе хатӗрлес енӗпе пурнӑҫланӑ ӗҫсем евӗр тӗслӗхсем хальлӗхе ҫукпа пӗрех.

Чӑваш науки производствӑсене аталантарма тата ҫӗннисене йӗркелеме хатӗр пулни питӗ пысӑк пӗлтерӗшлӗ Инноваците хавхалантарма, аталантарма пулӑшакан норматив-право никӗсне республикӑра йӗркеленӗ, патшалӑх пулӑшӑвӗ памалли майсене туса ҫитернӗ, ҫав шутра тавӑрса памалла мар бюджет инвестицийӗсем мелӗпе те. Ҫапла шухӑшлатӑп: Чӑваш Енри кашни аслӑ шкулти техника кафедринех 10-ран кая мар наука тӗпчев тата сӑнав-конструктор ӗҫӗсем туса хатӗрлемелле, вӗсене каярах производствӑна кӗртмелле тата ҫӗнӗ тавар туса кӑлармалла. Экономика аталанӑвӗн, промышленноҫ тата суту-илӳ министерствин ҫакна тӗплӗн тӗрӗслесе тӑмалла, мӗншӗн тесен республикӑн хӗ.ӗн тулашри ҫыхӑнӑвӗсене анлӑлатмалла.

2012 ҫулхи тӗллев ҫавӑн пекех федераци шайӗнче йӗркеленӗ технологи платформисен йышне кӗрессине анлӑлатасси пулса тӑрать, – паянхи кун эпир 6 платформӑна хутшӑнатпӑр, пирӗн тата ҫавнашкал 3 платформӑна кӗмелле. Халь пурнӑҫланакан проектсене шута илсен, Чӑваш Еншӗн биотехнологи, ҫӗнӗ композит материалӗсем тата машиностроени енӗпе пурнӑҫа кӗрекен технологи платформисем илӗртӳллӗрех шутланаҫҫӗ.

Паян Чӑваш Ен организацийӗсем тӗнчери 70 ытла ҫӗр-шывпа ҫыхӑнса ӗҫлеҫҫӗ. Тӗнче кризисӗ пирӗнтен те пӑрӑнса иртмерӗ, анчах та кӑҫал эпир 2008 ҫулхи тулашри суту-илӳ ҫаврӑнӑшӗн калӑпӑшне ҫитсе пыратпӑр. Ҫапах та, ют ҫӗр-шыври тата НППП ҫӗр-шывӗсенчи **тулашри рынока тухас енӗпе тӑвакан** хамӑрӑн ӗҫ-хӗле хакланӑ май, пирӗн тавар туса кӑларакансен амбициллӗ тӗллевӗсем пулманнине куратӑп. Пӑшӑрханса палӑртма тивет: эпир халӗччен тунӑ ӗҫсен вӑй-халӗпе усӑ куратпӑр, хамӑр вара ниепле те малалла аталанмастпӑр.

Экспорт валли ӗҫлекен предприятисене федераци правительстви тӗрлӗ йӗркепе пулӑшу памалли майсем сӗнет. Чӑваш Енре пӗчӗк тата вӑтам бизнес валли тулашри рынока тухмалли майсем туса панӑ, Экспорт пулӑшӑвӗ паракан центр йӗркеленӗ, финанс енӗпе пулӑшассине те тивӗҫтернӗ. Урӑхла каласан, патшалӑх тавар кӑларакансене хастарлӑн пулӑшма тӑрӑшать, анчах нумай харпӑрлӑхҫӑ хӑйне сӳрӗк тыткалать, мӗн пуррипе ҫырлахать. Ҫакна эпӗ пачах та ӑнланма пултараймастӑп!

«Раҫҫей – Беларуҫ – Казахстан» таможня союзне ҫирӗплетнӗ хыҫҫӑн бизнесшӑн ҫӗнӗ

4 стр.

Пĕтĕмпех çын валли тата çыншăн

(Вĕçĕ. Пуçл. 1,2,3 стр.).

майсем усăлаççĕ. Çĕнĕ çулхи кăрлачĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа таможня чăрмавĕсене пăрахăçлаççĕ тата экономикăн пĕр пĕтĕм анлăхĕ йĕркеленет. Раççей Пĕтĕм тĕнчери суту-илӳ организацине кĕни экономикăна пысăк улшăнусем кĕртет. Лару-тăрăва çăмăллатма пĕр май çеç куратăп: предприятисен ертӳçисен хăйсен производствин хăватне, рынокри хăйсен таварĕсене комплекслă майпа хак памалла тата ĕççен программине тумалла.

Тата та кирли çакă: модернизаци, инноваци енĕпе татах та, татах та ĕçлемелле, сайра, пĕртен пĕр шутланакан тата хăй хаклăхĕ йӳнĕ таварсем туса кăларса вĕсем лайăх сутăнассине тивĕçтермелле. Енчен те çакна тумасан пирĕн тавар туса кăларакансен тĕнчери кризиссенчен яланах шикленме кăна мар, шалти рынокри конкурентсене те пăхăнса тăма тивĕ. Эпĕ калани чăваш экспортçисене кăна мар, бизнесра ĕçлекен мĕн пур çынна пырса тивет. Мĕншĕн тесен бизнесра пĕлсе тата яваплăха туйса ĕçлекенсен ĕçĕ шăпах кризис тапхăрĕнче ăнăçать.

Граждансен 40 процентĕнчен ытларах пайĕ ялта пурăннăран **агропромышленноç комплексне аталантармалли ăнăçлă йĕркелӳ тата финанс майĕсем туса хурасси** тĕп тĕллев пулса тăрать. Приоритетлă наци проектне пурнăçлама тытăннăранпа Чăваш Ен агропромышленноç комплексне хывнă инвестицисен калăпăшĕ, бюджет укçи-тенкине шута илмесĕр, 26 миллиарда яхăн тенкĕпе танлашнă. Çакна каламалла: пирĕн эффективлăх кăтартăвĕсем – çĕр-шывра чи пысăккисенчен пĕри: 100 гектар пуçне выльăх-чĕрлĕх тата кайăк-кĕшĕк туса илесси Раççейрипе танлаштарсан икĕ хута яхăн пысăкрах, сĕт суса илессипе – виçĕ хута яхăн. Федерацин Атăлçи округĕнче юлашки пилĕк çулта /2010 çула шутламасăр/ ял хуçалăх производстви тăватă регионта кăна ӳснĕ. Çавăнпа та регионти хăш-пĕр политика партийĕсен ертӳçисем пире ял хуçлăх производствине мĕнлерех тытса пымаллине вĕрентме хăтланни кулăшла туйăнать.

Çакна палăртмалла: ку çул республикăшăн нихçанхинчен те тухăçлă пулчĕ. **Ял хуçалăх производствин 9 уйăхри индексĕ 134,8 процентпа танлашнă** /Раççей Федерацийĕнче – 115,9 процент/. Пĕтĕмĕшле продуктăн хаксемпе палăртакан çавнашкал пысăк калăпăшне /хальхи хаксемпе/ Чăваш Ен нихăçан та туса илмен. Çавăнпа та эпĕ çĕр ĕçченĕсене ырми-канми ĕçĕсемшĕн тав тăватăп.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе тӳрремĕнех витĕм кӳнĕ 2010 çулхи типĕ çанталăк сиенĕсене пĕтерме Раççей Правительстви те халĕччен пулман пулăшу кӳчĕ. Тăкаксене бюджет шучĕпе вăтамран 45 процент виçепе саплаштарни – СССР историйĕнче те, хальхи Раççей кун-çулĕнче те пулман. Асăннă пулăшусăр ял хуçалăхĕнчи чылай хуçалăх тытакан субъект çука юлнă пулĕччĕ, çакă вара çынсем ĕç вырăнĕсене йышлăн çухатасси патне илсе пыма пултаратчĕ, ял хуçалăх производствине чĕртсе тăратма чылай вăхăт кирлĕ пулатчĕ.

Юлашки çулсенче Чăваш Енре 100 ытла инноваци объектне – тĕнчери тĕслĕхсемпе тӳр килекен хальхи вăхăтри çĕнĕ производствăсене хута янă. Апла пулин те – ял хуçалăхĕ тирпейлекен ĕçрен пысăкрах хăвăртлăхпа аталанать. Çакна шута илсе эпир çĕнĕ заводсем тăвакан инвесторсен процент ставкисене субсидилес енĕпе хамăр çине обязательствăсем илтĕмĕр. Пирвайхи проектсем хута каяс шайра ĕнтĕ, çавна май эпĕ вĕсен тĕслĕхне курса çак ĕçе хăватлă ытти инвесторсем те хутшăнасса шанатăп.

Ял хуçалăх производствин тĕп тĕллевĕсенчен пĕри – унăн тупăшлăхне ӳстересси. Çакна пурнăçлас тесен чи малтанах экологи тĕлĕшĕнчен таса ял хуçалăх продукцине туса кăларассине йĕркелеме кирли çинчен пĕрре мар каланă ĕнтĕ. Рынокăн çĕнĕ пайне йĕркелессине «Чăваш биопродукчĕ» логотип тунинчен, «Органика» лавккисен тытăмне хута янинчен, çавнашкал апат-çимĕçĕн стандартне ĕçе кĕртнинчен тата вĕсене ирĕклĕ майпа сертификацилессинчен пуçланă. Асăннă таварсене туянасси ӳсни халех палăрать. Чăваш тавар туса кăларакан ĕсен продукцийĕ пĕтĕм тĕнчери экологи экспертизи урлă ăнăçлăн иртет.

Тăватă çул хушшинче эпир усă курман 100 пин гектар ытла ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсене çаврăнăша кĕртрĕмĕр. Анчах та пирĕн тата çавăн пек 30 пин гектар пур. Пĕлтĕрхи типĕ çанталăк çав çĕрсене çаврăнăша кĕртме май памарĕ. Министрсен Кабинетне вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе пĕрле çитес çул çак ĕçе пĕтĕмпех вĕçлеме хушатăп.

Ялти çĕр лаптăкĕсене инвестици проекчĕсене пурнăçлама уйăрса парас ĕçе ансатлатасси пĕлтерĕшлĕ çул-йĕр пулса тăмалла. Ку ĕçе пурнăçлама тытăннă ĕнтĕ. Унпа пĕрлех муниципалитет тата уйрăм çын харпăрлăхĕнчи çĕр лаптăкĕсемпе спекуляци тăвассипе çыхăннă тĕслĕхсене пĕтермелле. Çавна май Чăваш Республикин Министрсен Кабинетне граждансем хăйсем тытса тăракан çĕрсене сутас кăмăллă пулнине палăртса чĕнсе каланисене тĕплĕнрех, вырăна тухса тата çав çĕр лаптăкĕсене хак парса пăхса тухма хушатăп. Кирлĕ пулсан инвесторшăн илĕртӳллĕ шутланакан çĕр лаптăкĕсене туянма тата вĕсене Чăваш Республикин харпăрлăхне кĕртме Чăваш Республикин майлăрах туяну правипе усă курмалла.

Бизнеса аталантарасси, çĕнĕ ĕç вырăнĕсем йĕркелесси тата ĕç укçине ӳстересси яланах **регионăн инвестици илĕртӳлĕхĕпе** çыхăннă. Пирĕн çакăн валли пĕтĕм норматив-право никĕсне туса хунă, инвестицисене пулăшмалли, административлă чăрмавсене чакармалли программăсем йышăннă, кашни муниципалитет пĕрлĕхĕнчех инвестици проекчĕсене пурнăçлас енĕпе пайăр тĕллевсем палăртнă. Эпир инвестици хăвăртлăхĕсем енĕпе Раççейре малтисенчен пĕри шутланатпăр: 2010 çулта – 122 процент, çав вăхăтрах ку кăтарту Раççейре 106 процент. Эпĕ çак хăвăртлăхсем сыхланса юласса шанатăп.

Инвестицисем килсе кĕрессине ӳстермелли ресурса эпĕ **индустри паркĕсем, кластер майĕпе хăвăрт аталанакан территорисем тата ыт. те туса хурса территорисене аталантармалли** çĕнĕ майсенче куратăп. Кашни муниципалитет пĕрлĕхĕн вăйлăрах енĕсене тупса палăртассине тĕпе хурса республика территорийĕнче экономикăн кал-кал ӳсĕмĕн тăрăхĕсене йĕркелесси инвестици политикине тĕллевлĕн тытса пынипе тата мультипликативлă эффект тăвакан, стратеги характерлă экономика ӳсĕмĕн вырăнĕсене йĕркелекен экономика сферисене инвестици капиталне хастарлăн явăçтарассипе тачă çыхăннă.

Чăваш Ен **монохуласем енĕпе пурнăçланакан Раççей проектне** ăнăçлăн хутшăнать. Укçатенкĕ пулăшăвĕ илмелли перечене лекме хулан тĕплĕн туса хатĕрленĕ инвестицин комплекслă планĕ пулмалла. Çак ĕç пĕртте ансат мар, çапах та эпир ăна пурнăçларăмăр. Пуçарăва Çĕнĕ Шупашкар турĕ, ăна бюджет укçи-тенки шучĕпе 1 миллиард та 482 миллион тенкĕ ытла патшалăх пулăшăвĕ панă, çав шутра 2011 çулта – 1 миллиард та 81 миллион тенкĕ ытла. Кăçал Улатăр хулин инвестицин комплекслă планĕпе палăртнă ĕççене пурнăçлама бюджет укçи-тенкине 332,3 миллион тенкĕ ытла уйăрнă. Халĕ вара федераци бюджетĕнчен чăн пулăшу илме хаклавăн мĕн пур виçи витĕр тухас тесен Канашра, Çĕмĕрлере, Етĕрнере тата Сĕнтĕрвăрринче пурин те çине тăрса ĕçлемелле. Хăйсен бизнес планĕсене Раççей Правительствинче тата Тулашэкономбанкра çирĕплетес тесен муниципалитетсен хăйсен территорийĕнчи инвесторсемпе тата халăхпа, хăйсен модернизаци программисене пурнăçлама палăртакан предприятисемпе пысăк ĕç туса иртермелле. Чăваш Енри 6 монохулан инвестици проекчĕсене пурнăçлани 23 пине яхăн ĕç вырăнĕ йĕркелеме, ĕç укçине 35 пин таран ӳстерме май парать. Раççей Федерацийĕн Правительстви монохуласен проекчĕсем валли çулсерен 5 миллиард тенкĕ уйăрма палăртать.

Эпĕ 2012 çулта экономикăна модернизацилес тата диверсификацилес тĕллевпе кашни муниципалитетах хăйĕн инвестицин комплекслă программине туса хатĕрлемелле тата вĕсене туса хатĕрлеме администраци пуçлăхĕсене Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн мĕн пур органĕсем пулăшмалла тесе шухăшлатăп.

Çак ĕç шайĕнче патшалăхпа уйрăм çынсен ĕçтешлĕхне пурнăçа кĕртессине хастарлăн аталантармалла. Ку вăл бизнеспа влаç пĕр-пĕринпе çыхăнса ĕçлемелли чи тухăçлă тĕслĕхсенчен пĕри шутланать. Унпа тĕнчери чылай çĕр-шывра ăнăçлăн усă кураççĕ. Республикăра, тĕпрен илсен, çакăн валли кирлĕ пек нормативлă право никĕсне туса хатĕрленĕ, политика çирĕплĕхĕ кăна çитсех каймасть. Инвестици проекчĕсемшĕн палăртнă хутшăнусен çавнашкал йĕркипе пысăк проектсенче те, пĕчĕк тата вăтам бизнесра та усă курмалла.

Чăваш Республикин Министрсен Кабинетне çавăн пекех обществăшăн пысăк пĕлтерĕшлĕ шутланакан, социаллă пурнăça пырса тивекен саккун проекчĕсене тата норматив-право акчĕсене йышăннă чухне вĕсене малтанласа общественноçпа анлăн сӳтсе явассине, проектсен тĕп йĕркисене ăнлантарса парассине тивĕçтерме ыйтатăп.

Халĕ пурне те пырса тивекен тема – пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх пирки. Çакна палăртатăп: Чăваш Ен хăйне Раççейри Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха реформăлама пулăшакан фонд тĕпрен юсав ĕçĕсем ирттерме виçĕ çуллăха уйăрса панă лимита хăвăрт алла илчĕ тата пире хушма укçа-тенкĕ те пачĕç. Ку вара 2,5 миллиард тенкĕ, унпа усă курса нумай хваттерлĕ 1 пин ытла çурта юсанă. Анчах та çакă нумай хваттерлĕ çуртсен 25 процентĕ кăна. Ку – пĕрремĕш утăм. Çавăнпа та 2012 çулта республика çавăн пек хăйĕн Фондне йĕркелет, вăл асăннă юсава малалла тума май парĕ, çав ĕçе вара муниципалитетсен те, граждансен хăйсен те хастарлăн хутшăнмалла. Тĕпрен юсамалли ĕççен юлнă пĕтĕм калăпăшне хăçан вĕçлесси те çавна май, вĕсен хастарлăхĕнчен килет.

Раççей Правительстви кăçал коммуналлă пулăшу ĕçĕсен хакĕсем ӳсессине 15 процент шайпа чикĕлерĕ. Чăваш Енре ку тĕлĕшпе йĕркене пăснă тĕслĕхсем пулман. Халăха хӳтĕлес тĕллевпе çитес çул тарифсене улăштарассине çулталăкăн иккĕмĕш çуррине куçарнă, çакă çул пуçламăшĕнче инфляци ӳсессине сирме тата тарифсем ӳсес хăвăртлăха чакарма май парать. Граждансем коммуналлă пулăшу ĕçĕсемшĕн тӳлекен хаксем ӳсесси, 2011 çулхи шайпа пăхсан, 10,4 процентпа танлашать. Çапла вара 2012 çулта хаксем ӳсессин хăвăртлăхĕ, 2010 çулхипе танлаштарсан, 2,5 хут пĕчĕкрех пулать. Унсăр пуçне, пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшу ĕçĕсемшĕн тӳлеме субсидисем илсе тăракан чи сахал тупăшлă граждансене социаллă хӳтлĕхпе тивĕçтерме палăртнă. Шупашкарта пурăнакан кашни тăваттăмĕш çын уйăрса панă çăмăллăхсемпе усă курать.

Граждансем коммуналлă пулăшу ĕçĕсемшĕн тӳлекен хаксен виçисене чакарма энерги ресурсĕсене перекетлес енĕпе ытларах ĕçлемелле. Пĕтĕм çуртри кăтартусене тата харпăр хăйĕн кăтартăвĕсене шута илмелли хатĕрсене вырнаçтарни çемье енчĕкне шанчăклăн сыхлама пулăшать. Юпа уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне пирĕн ку енĕпе статистика çапларах: пĕтĕм çуртри кăтартăва шута илекен хатĕрсемпе нумай хваттерлĕ çуртсен вăтамран 70 процентне, харпăр хăйĕн кăтартăвĕсене шута илмелли хатĕрсемпе – хваттерсен 50 процентне тивĕçтернĕ. Кунта пуриншĕн те шухăшламалли пур. Техника тĕлĕшĕнчен пуянлатасси тата ресурссене перекетлемелли технологисене ĕçе кĕртесси пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх организацийĕсен ĕçĕ-хĕлĕнче тĕп вырăнта тăмалла.

Çапах та пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн граждансене пăлхантаракан тĕп проблеми урăх çĕрте палăрать: ку паракан пулăшу ĕçĕсен пахалăхĕ тата ертсе пыракан компанисем хăш-пĕр чухне укçа-тенке илсе кайни. Ертсе пыракан компанисен устав капиталне пысăклатмалли çинчен эпир пĕлтĕрех каланăччĕ тата ку ыйту çине тĕплĕн те çирĕппĕн пăхатпăр. Тӳрĕ мар кăмăллă пилĕк ертӳçĕ тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарнă. Уголовлă ĕçсем – пĕртен пĕр тĕллев мар, анчах та эпир шар курнă граждансене хӳтĕлеме тивĕç. Раççей Президенчĕ федераци органĕсене, регионти влаçа тата муниципалитетсене пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх сферинче çирĕп йĕрке тума тивĕçлĕ хушусем пачĕ.

Сăмах май, шăпах çак сфера суйлав умĕнхи тавлашусенче чи паллă тата спекулянтла тема шутланать. Çавна май çакна пăлăртса хăвармасăр пултараймастăп: маншăн тата Чăваш Енри чылай çыншăн политика партийĕсен регионти хăш-пĕр ертӳçисем «Новэк» ертсе пыракан компани тата «САВВА» компанисен ушкăнĕн ĕçĕ-хĕлĕнчен шар курнă Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкар хулисенче пурăнакансене мар, çав компанисен ертӳçисене хӳтĕлес тĕлĕшпе йышăннă позици ытла та тĕлĕнмелле пек туйăнать. Ку вĕсен совеçĕ çинче юлать тесе шухăшлатăп. Çапах та ун пек ĕççене Чăваш Ен халăхĕн хак памалла.

Ертсе пыракан компанисен ĕçĕ-хĕлĕн уçăмлăхĕпе çыхăннă ыйтусем паян малти вырăна тухаççĕ, çавăнпа та эпĕ юпа уйăхĕнче указ кăлартăм, вăл пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшу ĕçĕсенче Чăваш Енре пурăнакан çынсен прависемпе интересĕсене хӳтĕлемелли хушма майсене йĕркелеме пулăшать. Шăпах çав тĕллеве – ертсе пыракан компанисен ĕçĕ-хĕлĕн уçăмлăхне тивĕçтерессине – Интернетри Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх Порталĕ /www.jkh.cap.ru/ пурнăçламалла. Паян вăл тест йĕркипе ĕçлет, анчах çывăх вăхăтрах республикăри халăх хушшинче ăнлантару тата право ĕçне хастарлăн туса пыма тытăнĕ. Мĕн пур ертсе пыракан компанин унта хăйĕн ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштаракан информацие, бухгалтерин отчет докуменчĕсене, çирĕплетнĕ тарифсене, тума палăртнă тата тунă юсав ĕçĕсем çинчен пĕлтернисене вырнаçтармалла. Çак информацие 5 çул хушши паллашма май пулать тата вăл кашни гражданина ертсе пыракан компани пурнăçлакан ĕççене тĕрĕслесе тăма май парать.

Пулăшу ĕçĕсем панă чухнехи уçăмлăх, çавăн пекех инçетлĕх тата никама пăхăнманлăх, çакна хальхи информаци технологийĕсем тивĕçтереççĕ, **патшалăха чылай енĕпе коррупципе кĕрешме,** патшалăх хатĕрлевĕн сферине тата патшалăхпа муниципалитет паракан пулăшу ĕçĕсене те кĕртсе, май параççĕ.

Ыйтăвĕ ку самаях йывăрскер, вăл тĕнчери кашни çĕр-шыврах вун-вун çул хушши татăлайми ыйту пулса юлать, унпа кĕрешес тĕллевпе çĕр-шывра федерацин тивĕçлĕ саккунне тата Коррупципе кĕрешмелли наци стратегине йышăннă. Пурнăç асăннă сферăра пурте лайăхах маррине çирĕплетет. Кун пек лару-тăру пире çырлахтарма пултараймасть. Çавăнпа та коррупципе кĕрешесси пирĕншĕн – принциплă тата тĕп тĕллев. Çавна май пĕтĕм шайри влаç тытăмĕнче ĕçлекен тӳресен саккунсене пĕр пăркаланмасăр пăхăнмаллине палăртса хăваратăп. Унпа пĕрлех патшалăх управленийĕн мĕн пур сферин уççăнлăхне тивĕçтермелле тата коррупципе кĕрешес ĕçе общественноçа анлăн явăçтармалла.

Пĕрлехи ĕçĕн çакăн пек тĕслĕхĕ кăтартуллă. Право йĕркине сыхлакан органсем «Акатуй» тата «СПАР» лавккасенче суя эрехĕн виçĕ тĕсне /«Старорусская», «Пшеничная», «Выбор. Хлебная»/ сутни çинчен заявлени илнĕ. Малтанлăха ирттернĕ тĕрĕслев тата суту-илӳ ĕçне тишкерни çакна уçăмлатнă: 90 организаци суя таварпа кăна мар, республика халăхĕн пурнăçĕшĕн хăрушă шутланакан эрехе сутма именмен! Çав хушăрах йышăну хакĕпе сутнă хак хушшинчи уйрăмлăх кам кĕсйине кĕни паллă мар.

Ку тĕслĕхпе тивĕçлĕ органсем пĕтĕмлетӳсем тăвĕç тата кирлĕ мерăсем йышăнĕç. Эпĕ вара пурне те ĕçкĕпе наркăмăшланса вилекенсен йышĕ çинчен аса илтересшĕн. Чăваш Ен Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин кăтартăвĕсем тăрăх япăх пахалăхлă «симĕç çĕлене» пула çулталăк пуçламăшĕнчен тытăнса 220 çын вилнĕ. Суя алкоголь таварĕпе сутă тунинчен республика бюджечĕ те хур курать. Асăннă сферăра çирĕп йĕрке туса хумасăр лăпланмастпăр. Республика Правительствинчи, Роспотребнадзорти должноçрисене, муниципалитетсен ертӳçисене чĕнсе калатăп: эпир хамăр территорире пулса иртекен пĕтĕм ĕçшĕн яваплă тата пирĕнех контроль ĕçне йĕркелемелле тата халăх хăрушсăрлăхне тивĕçтермелле.

Сăмахăма вĕçленĕ май çак залра ларакансене те, организацисен мĕн пур ертӳçине тата Чăваш Енре пурăнакансене те пирĕн çавăн пекех республика экономикипе унăн социаллă сфери хальхи вăхăт витĕмĕпе килĕшӳллĕн аталанса пынине ăнланмаллине шута илме ыйтатăп. Президент тата Правительство, тишкерӳçĕсем палăртакан экономика кризисĕн иккĕмĕш тапхăрĕн хăрушлăхĕ çĕр-шыва темлех сиен ан кӳтĕр тесе мĕн кирлине тăваççĕ. Унран та ытларах – Раççей малалла лайăх аталантăр, унта пурăнакансем вара хăйсене шанчăклăн туйччăр тесе çине тăрса тăрăшаççĕ.

Çĕр-шыв ертӳçисем çак кунсенче кăна бюджетсен хушшинчи хутшăнусене лайăхлатассипе çыхăннă темăна сӳтсе яврĕç тата регионсемпе муниципалитетсене тупăш полномочийĕсене çĕнĕрен пайлас тĕлĕшпе хавхалантармалли сĕнӳсем тăратма хушусем пачĕç.

Эпир тăвакан мĕн пур ĕç тĕллевĕ çынсен пурнăçĕн пахалăхне лайăхлатасси пулса тăрать. Çавăнпа та енчен те эпир çак тĕлĕшпе кашни сехетрех, кашни кунах малалла талпăнса тата кашни çын пурнăçне лайăхлатсах пымалла тухăçлăн ĕçлесен çитĕнӳ пулатех.

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕсен хальхи йышне пĕрле тунă тухăçлă ĕçшĕн, иртнĕ пилĕк çул хушшинче пĕрлехи вăйпа туса хатĕрленĕ, республикăн социаллă пурнăçĕпе экономикин ĕç-хĕлне çирĕппрех те лайăхрах тума пулăшнă саккунсен пĕлтерĕшлĕ йышĕшĕн Правительство ячĕпе тав тăватăп. Тепĕр хут палăртатăп: эпир пурнăçлама пултарайманнине шантарман, пуçланă ĕçе яланах вĕçне çитернĕ! Эпĕ çавăн пекех парламентри «Пĕрлĕхлĕ Раççей» фракцине парти иртнĕ суйлавра хăй çине илнĕ обязательствăсене хастарлăн пурнăçлама пулăшнăшăн тав тăватăп.

Обществăна, республикăра пурăнакансене çакна тепĕр хут шута илме ыйтатăп: вĕсем тепĕр икĕ эрнерен хăйсен политикăри чăн кăмăл-туйăмне палăртса çаккунсем кăларакан икĕ органа – Раççей парламентне тата Чăваш Ен парламентне йĕркелеççĕ. Яланхи пекех, саккун кăларакан органа суйланакан тивĕçлĕ кандидатсемпе пĕрле унта пит тӳрĕ кăмăллах тата пит таса чĕреллех мар, ытларах чухне хăйсемшĕн тăрăшакан, хăйсен сăмахĕнче час-часах аса илекен граждансен интересĕсемшĕн тăрăшсах кайман кандидатсем те лекме хăтланаççĕ. Çавăнпа та питех те пĕлтерĕшлĕ патшалăх органĕсен йышĕ мĕнлерех пуласси суйлавçăсем хăйсен бюллетеньне суйлав урнине яриччен тунă йышăнуран килет.

Çакна та палăртас тетĕп: суйлава каймасан та юрать, мĕншĕн тесен кирлĕ йышăнусене вĕсемшĕн ыттисем тăваççĕ текен шухăш пачах та тĕрĕс мар. Вăйра тăракан суйлав саккунĕсемпе килĕшӳллĕн граждансен суйласа илмелли ирĕкĕ хуть хăçан та пур тата вăл самаях анлă. Çавăнпа та пурне те граждан яваплăхне палăртма тата раштавăн 4-мĕшĕнче суйлав участокĕсене пырса сасăлама ыйтатăп.

Пире вăйлă Раççей кирлĕ. Пирĕн вăй – халăх пĕрлĕхĕнче. Çаплах Раççей пĕрлĕхĕнче – пуласлăх, тăван Чăваш Енпе унта пурăнакансен малашлăхĕ!

Итленĕшĕн пысăк тав!

Главный редактор
АУ ЧР «Редакция Вурнарской районной газеты «Çĕнтерӳ çулĕ» («Путь победы») – В.В.НИКОЛАЕВ.

Учредители – Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела ЧР, АУ ЧР«Редакция Вурнарской районной газеты «Çĕнтерӳ çулĕ».
Газета зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций по Чувашской Республике – Чувашия, свид. ПИ № 21-00106 ТУ от 23 июня 2010 года.

НАШИ АДРЕСА: 429220, Чувашия, п.Вурнары,ул.Советская, д.15, 2-й этаж; пер. Коммунальный, 4.
НАШИ ТЕЛЕФОНЫ: главный редактор – 2-52-30, отделы: сельской жизни; экономики и правовой жизни; рекламы – 2-52-57, бухгалтерия – 2-55-57, типография – 2-59-40.

Ответственность за точность приведенных фактов, опубликованных в газете, несут авторы, рекламодатели. Рукописи не рецензируются, не возвращаются. Материалы на правах рекламы публикуются под знаком (Р)

Индекс издания 54813. Печать офсетная. Объем 1 п.л. Тираж 3862 экз. Заказ 620.

Çĕнтерӳ çулĕ (Путь победы)

Газета выходит на чувашском языке два раза в неделю – по средам и субботам.
Время подписания в печать – 15 ч. 30 мин.
По графику – 16 ч.
Отпечатано в типографии АУ ЧР «Редакция Вурнарской районной газеты «Çĕнтерӳ çулĕ» («Путь победы»).